Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

61 (8022) № ✻ Шăмат кун, 2012 ҫулхи ҫурла (август) уйăхĕн 11-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ыран – Строитель кунĕ

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕПЛĔ СТРОИТЕЛĔСЕМ! СИРЕ ПРОФЕССИЛЛĔ УЯВ ЯЧĔПЕ САЛАМЛАТĂП!**

Строительство отраслĕн пĕлтерĕшне нимĕнпе те танлаштарма ҫук. Вăл ăнăҫлă ĕҫлени транспорта, металлургие, ҫĕр айĕнчи пуянлăха кăларакан отрасле, финанс тата экономикăн ытти отраслĕне аталантарас енĕпе питĕ пысăк вырăн йышăнать.

Ăслăлăхпа техника прогресĕ, строительствăн ку чухнехи материалĕсемпе тата технологийĕсемпе усă курни – ҫаксем пурте строительсен ăсталăхĕ умне пысăк требованисем кăларса тăратаҫҫĕ. Ҫавăнпа ҫак професси ҫыннисене пысăк пĕлӳ, кулленхи ĕҫре хăнăху, пысăк яваплăх кирлĕ.

Паян Чăваш Енĕн строительство комплексĕнче 30 пине яхăн ҫын ĕҫлет. Вĕсем квалификациллĕ пулнипе строительствăпа монтаж ĕҫĕсен калăпăшĕ ҫулсеренех ӳсет, ку чухнехи пурăнмалли тата административлă хăтлă ҫуртсем, культура, спорт, вĕренӳ, сывлăх сыхлавĕн объекчĕсем ҫĕкленеҫҫĕ. Патшалăх отраслĕ аталантарма хастар хутшăнать, пурăнмалли ҫурт-йĕр программисене пурнăҫлама укҫа-тенкĕ уйăрать. Пурăнмалли ҫурт-йĕр тума каякан укҫа-тенкĕн пĕтĕмĕшле пайĕнче кашни тăваттăмĕш тенкĕ – бюджетран уйăраканни.

Строительсене пурне те чун-чĕререн тав тăватăп, Чăваш Республикин строительство комплексĕн ҫирĕп никĕсне хывнă ветерансен ячĕпе уйрăмах ăшă сăмахсем каласшăн.

Сирĕн ҫемьесене ҫирĕп сывлăх, телей, хамăрăн юратнă республика ырлăхĕшĕн ĕҫлеме ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуҫлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

**ХИСЕПЛĔ СТРОИТЕЛЬСЕМ! ҪАК ĔҪĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире профессии уявĕпе – Строительсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Ҫулсеренех илемленсех, пуянлансах пырать районăмăр. Эсир ҫĕнĕрен те ҫĕнĕ ҫуртсем ҫĕклетĕр, ҫулсем тăватăр, юсатăр. Ҫапла майпа ҫынсен пурнăҫ условийĕсем те лайăхланнăҫемĕн лайăхланса пыраҫҫĕ. Тавах сире район аталанăвĕшĕн ырми-канми вăй хунăшăн, ҫынсене савăнăҫ парнеленĕшĕн.

Эсир малашне те ялсен инфраструктурине аталантарассинче ӳсĕм хысҫăн ӳсĕм тăвасса шансах тăратăп, ҫак ĕҫре ăнăҫусем сунатăп. Сывлăхăр ҫирĕп, ĕмĕрĕр вăрăм та телейлĕ пултăр.

**Район администрацийĕн пуҫлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

**ЗАО «МОРГАУШСКИЙ КИРПИЧНЫЙ ЗАВОД»** сердечно поздравляет работников завода и всех строителей с профессиональным праздником – Днем строителя! Искренне желает Вам крепкого здоровья, большого счастья, благополучия, новых сил, творческой энергии в трудовой деятельности.

## Пысăк хисепе тивĕҫ



*Сăн ӳкерчĕкре эсир "МСО "Моргаушская" акционерлă хупă обществăра каменщиксен бригадирĕнче тимлекен Геннадий Егорович Петрова куратăр. Мĕн ачаллах хăй пурнăҫне ҫурт-йĕр ҫĕклес ĕҫпе ҫыхăнтарма ĕмĕтленнĕскер кунта 1974 ҫултанпа вăй хурать. Ҫак тапхăрта унăн тăрăшулăхĕпе миҫе ҫемье ăшă хваттерлĕ пулнă пулĕ, кăна вара шутласа кăлараймăпăр.*

*– Кăмăлпа пурнăҫлакан тата килĕштерекен ĕҫе ытти пе улăштараймăн, – тет вăл хăйĕн специальноҫне пысăка хурса хакласа.*

*Тивĕҫлĕ канăва тухни ăна кунта тулли вăй-хăватпа тимлеме пачах та чăрмав кӳмест. Ĕҫтешĕсем ăна тăрăшулăхĕшĕн, пултарулăхĕшĕн хисеплеҫҫĕ тата тĕслĕхе илеҫҫĕ.*

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Паян – Физкультурник кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМСЕМ! СИРЕ ФИЗКУЛЬТУРНИК КУНĔ ЯЧĔПЕ САЛАМЛАТĂП.**

Физкультура, спорт тата сывлăх – пĕр-пĕринпе ҫыхăннă тата ҫывăх ăнлавсем, вĕсемсĕр паянхи ҫын пурнăҫĕ пулма та пултараймасть.

Паллă ăсчах тата врач Гиппократ авалах ҫырнă: "Гимнастика, вăй-хал упражненийĕсем, ҫуран утасси ĕҫлес пултарулăхне, сывлăхне, пурнăҫ савăнăҫне упраса хăварас текен кашни ҫыншăн кулленхи йăла пулса тăмалла".

Чăваш Енре массăллă физкультура юхăмне аталантарас енĕпе тĕллевлĕн ĕҫлетпĕр. Пирĕн республика федерацин "Раççей Федерацийĕнче 2006-2015 ҫулсенче физкультурăпа спорта аталантарасси" программине пурнăҫланă май пилотлă регионсен шутĕнче физкультурăпа сывлăх комплексĕсем тума пуҫларĕ. Юлашки пилĕк ҫулта 23 физкультурăпа сывлăх комплексĕ, футбол уйĕ, ҫуталăкĕпех ĕҫлекен пăр каток, шывра ишмелли 50 метрлă бассейн, лаша спорчĕн комплексне хута янă. Ҫынсене пĕтĕмпе 4 пине яхăн спорт сооруженийĕ йышăнать. Черетре – ҫĕнĕ футбол уйĕсемпе стадионсен, регионти Олимп хатĕрленĕвĕн биатлон, маунтинбайк, ухăран тĕл пересси, ҫăмăл атлетика центрĕсен строительстви, пысăк спорт объекчĕсен реконструкцийĕ.

Ҫакăн кăтартăвĕ – Чăваш Енре пурнăҫăн хастар йĕркине суйласа илекен, физкультурăпа тата спортпа туслă ҫынсен йышĕ ҫуллен ӳссе пыни. Чăваш Енре профессионалсен спортне аталантарас енĕпе патшалăхăн тухăҫлă политикине тытса пыни тĕнчене ҫĕнĕ чемпионсем парнелесси, пирĕн республикăра спортăн ҫĕнĕ те сутă ҫăлтăрĕсем ҫураласси пирки иккĕленместĕп.

Спорта юратакансене пурне те уяв ячĕпе саламлатăп. Пысăк ҫитĕнӳсем, сывлăх, ырлăх тата аталану сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуҫлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

**ХИСЕПЛĔ ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕМ, СПОРТСМЕНСЕМ, СПОРТПА ТУСЛĂ ҪЫНСЕМ ТАТА ФИЗКУЛЬТУРА ЮХĂМĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире Физкультурник кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп.

Физкультурăпа спортпа туслă пулни пурнăҫра пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ҫакă пире ҫирĕп сывлăхлă, ҫавăн пекех ҫирĕп кăмăллă пулма пулăшать. Сывă пурнăҫ йĕркипе пурăнакансем вара нимĕнле йывăрлăх умĕнче те ҫухалса каймаҫҫĕ. Палăртнă тĕллеве пурнăҫлама майне те тупаҫҫĕ, ăна пурнăҫлама вăй та ҫитет вĕсен. Ҫавăнпа та пирĕн, аслисен, ачасене мĕн пĕчĕкрен спортпа туслă пулма вĕрентмелле. Ку енĕпе вĕсемшĕн хамăрăн ыра тĕслĕх пулмалла.

Пирĕн ентешсем республика шайĕнче ҫеҫ мар, Раççей, Европа, тĕнче шайĕнчи ăмăртусене хутшăнаҫҫĕ, ҫĕнтерӳсем тăваҫҫĕ. Ҫапла майпа районăн ятне-сумне ҫĕклеҫҫĕ. Ҫакă йăлтах эсир хăвăрăн ĕҫĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăҫланипе ҫыхăннă. Тавах сире пархатарлă ĕҫĕршĕн. Малашне те физкультурăпа спорт районта пурăнакансемшĕн кун йĕркин уйрăлми пайĕ пулса тăтăр.

Сире пурне те ҫирĕп сывлăх, телей, тулли кăмăл сунатăп. Ĕҫĕрсем ăнса пычăр, спортра та ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем пулсах тăччăр.

**Район администрацийĕн пуҫлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

Йыхрав

## Хăвăр продукципе – пасара

Район администрацийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх Шупашкар хулинче пурăнакансене пахалăхлă ӳсентăран ял хуҫалăх продукцийĕпе килĕшӳллĕ хаксемпе тивĕҫтерес, ял хуҫалăх продукцийĕ туса илекенсене продукцие посредниксемсĕрех вырнаҫтарма майсем туса парас тĕллевпе Шупашкар хула администрацийĕн пуҫлăхĕн 2012 ҫулхи августăн 2-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе ял хуҫалăх продукцийĕпе сутă тума ятарлă вырăнсем уйăраҫҫĕ. Тепĕр майлă каласан «кану кунĕсен ярмăрккисене» йĕркелеҫҫĕ.

«Кану кунĕсен ярмăрккисем» официаллă майпа 2012 ҫулхи августăн 11-мĕшĕнче ĕҫлеме тытăнаҫҫĕ. Тулли информаци илес тесен Шупашкар хула администрацийĕн потребительсен рынокне тата предпринимательствăна аталантарассин управленине 23-50-55, 23-50-59, 23-50-57 телефонсемпе шăнкăравлама пултаратăр.

Вырма – 2012

## Пĕрремĕш ҫĕнтерӳҫĕсем паллă

***Вырмана хутшăнакан механизаторсен районти конкурсĕн итогĕсене пĕтĕмлетес енĕпе йĕркеленĕ комиссин ларăвĕ иртнĕ. Вырмана хутшăнакан комбайнерсен августăн 2-мĕшĕнчен тытăнса 8-мĕшĕнчехи ĕҫĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ.***

Ял хуҫалăх предприятийĕсенчи вырмана хутшăнакан механизаторсен районти ăмăртăвĕнче августăн 2-мĕшĕнчен тытăнса августăн 8-мĕшĕчченхи тапхăр итогĕсемпе ҫаксем мала тухнă тесе йышăннă:

1-мĕш вырăнта – Суворов яч. хис. ял хуҫалăх производство кооперативĕн **Раденеж Виссарионович Кузнецов** экипажĕ. «Акрос-530» маркăллă комбайнпа 286,8 условнăй тонна тырă вырса ҫапнă.

2-мĕш вырăнта – А.Н. Пихтеров хресчен (фермер) хуҫалăхĕн **Александр Васильевич Морозов** экипажĕ. «Полесье-812» маркăллă комбайнпа 205,4 условнăй тонна тырă вырса ҫапнă.

3-мĕш вырăнта – «Восток» ял хуҫалăх производство кооперативĕн **Сергей Валериянович Наумов** экипажĕ. «Енисей-1200» маркăллă комбайнпа 174 условнăй тонна тырă вырса ҫапнă.

1-мĕш вырăна тухнă комбайн экипажĕ 1000 тенкĕлĕх, 2-мĕш вырăна тухни – 800 тенкĕлĕх, 3-мĕш вырăна тухни 500 тенкĕлĕх свидетельствăсене тивĕҫнĕ.

Район уй-хирĕсенче

## Кĕртрисен пуссисенче ĕҫсем вĕҫленеҫҫĕ

Районти ял хуҫалăх предприятийĕсемпе хресчен (фермер) хуҫалăхĕсенче кăҫал тĕш тырă культурисене 13637 гектар ҫинчен пухса кĕртмелле. Ĕнерхи кун тĕлне 2634 гектар ҫинчи (19 процент) культурăсене вырса ҫапнă.

Кĕрхи тĕш тырă культурисен пуссисенче ĕҫсем вĕҫленсе пыраҫҫĕ. Кĕрхи тулă 1312 гектар (84 процент), ыраш 301 гектар (100 процент) вырса ҫапнă.

Ильич яч. хис. (32 процент), «Восток» (39 процент), Суворов яч. хис. (34 процент) хуҫалăхсенче, «ВаСем» обществăра (39 процент), «Колос» обществăра (40 процент), А.И. Толстовăн тата А.А. Афанасьевăн (32-шер процент), А.Н. Пихтеровăн (50 процент) хресчен (фермер) хуҫалăхĕсенче вырма ĕҫĕсем кал-кал пыраҫҫĕ.

Ҫурхи тĕш тырă культурисенчен тулă 117 гектар (3 процент), урпа 769 гектар (11 процент) вырса илнĕ. «ВаСем» обществăра урпана пĕтĕм лаптăк ҫинчен (120 гектар) пухса кĕртнĕ.

Пĕтĕмпе 3974 тонна тырă ҫапса тĕшĕленĕ. Тухăҫ гектар пуҫне вăтамран 15,1 центнерпа танлашать. Ҫав шутра урпа тухăҫĕ – 18,8 центнер.

Улăма 2422 гектар ҫинчен (ҫапса тĕшĕленин 92 проценчĕ) пухса тирпейленĕ.

Ҫĕртме 437 гектар ҫинче сухаланă. «ВаСем» (207 гектар) ку тĕлĕшпе ырă тĕслĕх кăтартать.

Саламлатпăр



Юратнă аннене, асаннене, аппана, мăшăра, хисеплĕ тăвана – Муркаш пурăнакан **Зоя Григорьевна УГЛЕВАНА** 50 ҫул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек ҫирĕп сывлăх, вăрăм кун-ҫул сунатпăр, малашне та сана пурнăҫра Турри вăй-хăват парсах тăтăр. Мĕн ĕмĕтленни-шутлани пурнăҫа кĕрсе пытăр ялан, хуйхă-суйхă ан пытăр ҫума нихăҫан. Анлă кĕрекӳ тăван кил-йыша хапăл тутăр куллен. Пире, ачусене, кун-ҫул йывăрлăхне пăхмасăр пурнăҫ ҫулĕ ҫине кăларнăшăн тата халĕ те пирĕншĕн чун-чĕрепе пулнишĕн тав тăватпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсем, ывăлĕпе кинĕ, кĕрӳшĕ, Анна мăнукĕ, ҫывăх тăванĕсем.**



Хамăр юратнă аннене, аппана, йăмăка, кукамие, тăхлача – Ахмане ялĕнче пурăнакан **Агния Петровна ИГНАТЬЕВĂНА** ҫуралнă кунĕ тата юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Ҫирĕп сывлăх, телейлĕ вăрăм кун-ҫул сунатпăр. Ачусемпе, тăванусемпе пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Эпир сана юратпăр, хисеплетпĕр, эсĕ пурришĕн Турра тав тăватпăр.

**Салампа: аппăшĕ, йăмăкĕсем, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, ял-йыш, пускилсем.**



Пирĕн хаклăран та хаклă ҫыннăмăра, чи юратнă аннепе кукамая, аппана – Турай ял тăрăхне кĕрекен Ҫулав ялĕнче пурăнакан **Зоя Борисовна ЛЕОНТЬЕВĂНА** 60 ҫулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ĕмĕтленни пурнăҫлантăр, хуйхи-суйхи аякран иртсе кайтăр. Тавах сана ăшă кăмăлушăн, йывăр вăхăтра пурне те пулăшма хатĕрришĕн, ялансах савăнăҫлă пул, сĕтелӳ ҫăкăр-тăвартан ан татăлтăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, йăмăкĕсемпе вĕсен ҫемйисем.**

Августăн 12-мĕшĕ – Строитель кунĕ

# Хĕрĕх çул – ăнăçли те, кăткăсси те

**САЛАМЛАТПĂР, ТАВ ТĂВАТПĂР!**

**Хисеплĕ ветерансем тата паянхи ĕçченсем, сире пурсăра та чунтан тухакан хĕрӳллĕрен те хĕрӳллĕ сăмахсемпе професиллĕ уявпа тата завод уявĕпе саламлатпăр. Сирĕн тивлетĕрпех эпир ӳсĕм çулĕпе çӳлеллех улăхма тăрăшатпăр. Çавăнпа та эсир чи ыррине те кăмăллине кăна тивĕç. Сирĕн пуçарупах пире халĕ республикăра çеç мар, унăн тулашĕнче те аван пĕлеççĕ, эпир кăларакан пысăк пахалăхлă продукципе анлă усă кураççĕ. Çакăншăн вара пирĕн, паянхи ĕçченсен, сирĕн умăрта пуç таймалла. Эсир хĕрĕх çул лартнă тĕллеве эпир пурнăçлатпăр. Çакăнта чикĕ лартмастпăр, малашне татах тухăçлăрах тăрăшма сăмах паратпăр. Сирĕн тата пирĕн сумлă ят яланах ырăпа янăратăр. Эсир ӳсĕм ялавне çӳле çĕкленĕ, пирĕн вара татах та çӳлерех çĕклесчĕ.**

**Уяв уяв пек килтĕр. Ăна валли сирĕн ăшă хĕвел пек савăк кăмăл, лаштра юман евĕр çирĕп сывлăх пултăр, ватлăх кунĕ çăмăллантăр, чир-чĕр аякра тăтăр, çамрăк ăру хисеплетĕр.**

**Завод администрацийĕ.**


Ю.И. Петров кирпĕч пахалăхне тĕрĕслет.

***Муркашри кирпĕч завочĕн ыран пĕр харăсах икĕ уяв паллă тума сăлтав пур. Пĕри – строительсен профессильлĕ уявĕ, тепри – хĕрĕх çул каялла завод ĕçлеме пуçлани.***

***Хĕрĕх çул каялла Муркаш салин тепĕр енче кирпĕч туса кăларакан пысăк завод хута кайнă. Хушма ĕç вырăнĕсем йĕркелени ку тăрăхрисемшĕн уйрăмах меллĕ пулнă, çурт-йĕр çĕклес пулсан та кирпĕч туянма аякка каймалла мар, вырăнти бюджетшăн та тупăшлă. Проектпа пăхнă икĕ кăмакаллă заводра пĕр çулталăкра 14 миллион та 800 пин штук сутлăх кирпĕч хатĕрлемелле. Пĕр талăкра вара алă пине яхăн кирпĕч хĕрсе тухмалла. Çакă – пĕрлехи тĕллев.***

***Унтанпа вăхăчĕ самай иртрĕ. 2006 çулхи январь уйăхĕнчен пуçласа асăннă завода Владимир Петрович Тукмаков директор ертсе пырать. Паянхи специалистсем вара мĕнле тĕллевпе ĕçлеççĕ-ши? Çак ыйту тавра заводри ку тĕлĕшри ĕçхĕле йĕркелесе пыракан директор çумĕпе Юрий Иванович ПЕТРОВПА калаçрăм.***


Тĕп бухгалтер Р.А. Антонова.

– Пирĕн тĕллев – пуçаруçăсен ĕçне малашне те тĕрĕс-тĕкел йĕркелесе пырасси. Продукци, тупăш калăпăшне татах та ӳстересси, завод ятне çӳлтен çӳле çĕклесси ялан тĕп вырăнта тăрать. Хĕрĕх çул хушшинче лайăххи те, япăххи те пулнă, йăлтах чăтса ирттертĕмĕр. Эпир халĕ каллех ӳсĕм çулĕ çинче. Тĕрлĕ йывăрлăха çĕнтерсе паянхи кун пирĕн коллективăн тулли хăватпа ĕçлеме майсем çителĕклĕ.

Малтанхи çулсенче заводра йăлтах алă вăйĕпе тăрăшнă пулсан, паян автоматизаци мелĕ пуç пулса тăрать. Çакă, паллах, тупăш илессинче, кунта ĕçлекенсен вăй-хăватне, сывлăхне перекетлессинче те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

**– Завод хĕрĕх çул тултарчĕ. Çак ӳсĕмри çын вара пурнăç тути-масине самай астивме ĕлкĕрет: савăнăçне те, кичеммине те. Заводăн хĕрĕх çулне мĕнле тапхăрсем çине уйăрнă пулăттăр?**

– Çакна эпĕ ăнăçли тата ăнăçсăрри çине уйăрăттăм. Акă, тĕслĕхрен, 2006 – 2008 çулсенче пирĕн производство ăнăçлă аталанчĕ. Анчах та тĕнчери экономикăпа финанс кризисĕ пире те ура хучĕ. Çавна май продукци хатĕрлесе сутасси самай уксахларĕ, унпа пĕрлех – услам илесси те. Астăватăр пулĕ, вăл тапхăрта, пĕтĕмĕшле илсен, строительство ĕçĕ вăхăтлăх сахалланчĕ. Пирĕн тĕп продукци вара, шăпах çавăнта каймалласкер, сутăнайманнипе тупăш параймарĕ. Çавăнпа та пĕр кăмакана вăхăтлăх чармалла пулчĕ, унпа пĕрлех ĕçлекенсен йышĕ те палăрмаллах чакрĕ.

**ЗАВОД СĔНЕТ**

***Халăха сутмалли сортланă 100 маркăллă 1 пин штук кирпĕч – 8201 тенкĕ, 125 маркăлли – 8614 тенкĕ, 150 маркăлли – 9322 тенкĕ. Кондицие ларман 1 пин штук кирпĕч – 4012 тенкĕ, 1 кубла метр кирпĕч щебенĕ – 1652 тенкĕ. Транспорт услуги 1 çухрăмшăн – 63, 72 тенкĕ. Кирпĕч айне хумалли поддон (пĕрин çине 250 кирпĕч вырнаçать) 118 тенкĕ тăрать.***



Экономикăпа финанс кризисĕччен заводра 186 çын тăрăшнă. Паянхи кун тĕлне 137-ĕн вăй хураççĕ, иртнĕ çул 108-ăн пулнă. Çуллахи вăхăтра шкул ачисене те завода явăçтаратпăр. Саккунпа килĕшӳллĕн вĕсем кĕскетнĕ ĕç кунĕпе тимлеççĕ, кирпĕч сортлаççĕ. Кунта тимлекенсен вăтам ӳсĕмĕ хĕрĕх çула яхăн. Апла пулсан пысăк тухăçпа тăрăшмалли коллектив теме пулать. Хальлĕхе заводра ĕçлекенсем çителĕксĕр.

Хăй вăхăтĕнчи йывăр тапхăр коллектива пысăк парăм умне тăратрĕ. Халĕ вара заводăн парăм пачах та çук.

Тепĕр тапхăр – ăнăçли. Халĕ эпир çак юхăмра аталанатпăр тесе çирĕплетсе калама пултаратăп. Икĕ кăмака тулли хăватпа ĕçлет, пирĕн продукцие туянакан яланхи клиентсем йышлă. Хатĕр кирпĕч картишĕнче сутăнмасăр пачах та купаланса выртмасть, мĕн хатĕрлени йăлтах вырнаçать. Çакă татах та ӳсĕмлĕрех ĕçлеме хавхалантарать. Кунсерен заводран пин-пин штук кирпĕч ăсанать. Пĕр талăкра икĕ кăмакаран 48 пин те 300 штук кирпĕч тухать, çапах та хатĕр продукци çитмест. Завод икĕ сменăпа ĕлет.

**– Муркаш кирпĕчне камсем ытларах кăмăллаççĕ?**

– Продукци пысăк пахалăхлă пулнине кура республикăра çеç мар, унăн тулашĕнче те аван туянаççĕ. Пысăк парти илекенсем малараххах саккас параççĕ. Халĕ вара продукци ытларах Хусана ăсанать. Унта универсиада ирттерме хатĕрленнĕ май спорт сооруженийĕсене çĕнетеççĕ. Маларах вара Мускав хулинчи Хĕрлĕ тӳрем юсама турттарчĕç. Енчен те пахалăх туянакана тивĕçтермен пулсан çавăн пек инçе çула илсе каймĕччĕç.

**– Рынок шайĕнчи ăнăçлăха эсир мĕнпе ăнлантаратăр?**

– Паллах, пысăк пахалăхпа. Технологие çирĕп пăхăнни пысăк пахалăхлă продукци хатĕрлесе кăларма май парать. Кирпĕч тунă çĕрте усă куракан тăм кашни кун пахалăх тĕлĕшпе лабораторире тĕрĕсленет. Кирпĕч хатĕрлемелли тăм çилпе хĕвел, юр, çумăр пулăшнипе пĕр çулталăк пиçсе, пулса выртать. Кайран тин производствăна каять. Унччен вара маларах хатĕрленипе усă куратпăр. Пирĕн патран 100, 125, 150 маркăллă стандартлă кирпĕч тухать.

**ĔÇ ВЫРĂНĔСЕМ ПУР**

***Муркашри кирпĕч завочĕ ĕç вырăнĕсем пуррине пĕлтерет. Ĕç укçине вăхăтра тӳлет. Коллективлă килĕшӳпе пăхнă çăмăллăхсем пур. Тĕплĕнрех ыйтса пĕлме 62-3-47 телефонпа шăнкăравлăр.***

**– Çапах та иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан тупăш илесси хăш шайра-ха?**

– Иртнĕ çулхи çичĕ уйăхра 3292, 8 пин штук кирпĕч хатĕрлесе кăларнă, продукцие сутса 18671 пин тенкĕ тупăш илнĕ. Кăçалхи кăтарту вара ӳсĕмлĕрех. Çичĕ уйăхра 5164, 6 пин штук кирпĕч хатĕрлесе кăларнă, тупăш илесси 34828 пин тенкĕпе танлашнă.

**– Вăрттăнлăх мар пулсан, кунта ĕçлекенĕн пĕр уйăхри вăтам ĕç укçи миçе тенкĕпе танлашать?**

– Паллах вăрттăнлăх мар. Пĕр уйăхри вăтам ĕç укçи – 11763 тенкĕ. Рабочисем уйăхсерен икĕ хутчен шалу илеççĕ. Унсăр пуçне коллективлă килĕшӳ çинче хăш-пĕр çăмăллăхсем палăртса хунă. Юбилей ячĕпе, тивĕçлĕ канăва тухнисене тата ытти самантсенче хушма укçа тӳлесси пур. Çавăн пекех саккунпа килĕшӳллĕн инвалидсем валли те ĕç вырăнĕсем йĕркеленĕ.

Кадрсен ыйтăвне ăнăçлă татса пама тăрăшатпăр. Чылай çул ĕçлекен специалистсем – çамрăксен вĕрентӳçисем. Вĕсем яланах ырă канашсĕнӳ пама хатĕр.



**Кăларăма**
**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**хатĕрленĕ.**

# В. СЕМЕНОВ: "Тĕп тĕллев – район аталанăвĕшĕн ĕçлесси"

**Аталану çулĕ**

*Нумай хваттерлĕ илемлĕ çуртсем ăшă çумăр хыççăнхи кăмпа евĕр умлă хыçлă çĕкленнипе Муркаш салине урăх сăн-сăпат кĕртрĕç. Строительство ĕçĕ малашне те çак шайрах аталанса пырсан район центрĕ кĕçех хула шайне те çĕкленĕ. Унччен кунта икĕ хутлă çуртсем кăна пулнă пулсан, халĕ ытларах 3 – 4 хутлисем вăя кĕреççĕ, вĕсем йăлтах паянхи пурнăç ыйтăвне тивĕçтерекеннисем – çĕнĕ йышши технологипе пурнăçланисем. Çак аталанăва манăн «МСО «Моргаушская» акционерсен хупă обществи çулран çул ÿстерсе пыракан пысăк ăсталăхпа çыхăнтарас килет. Районăн экономикăпа социаллă аталанăвĕнче унăн тÿпи пысăк.*

*Эпĕ строительсен профессиллĕ уявĕ умĕн асăннă организацин генеральнăй директорне, депутатсен районти Пухăвĕн депутатне, район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи обществăлла канашăн членне, предпринимательсен канашĕн ертÿçине Владислав Николаевич СЕМЕНОВА калаçăва чĕнтĕм.*

– Организаци коллективĕн пĕрлехи тăрăшулăхĕ район сăн-сăпатне палăрмаллах улăштарма пултарни вара питĕ кăмăллă, çакăнта пирĕн тĕп ĕç-хĕл курăнать те. Строительсен коллективĕн тĕп тĕллевĕ – район ăнăçлăхĕшĕн ĕçлесси, çынсене пысăк пахалăхлă çурт-йĕрпе тивĕçтересси, çакăнпа çыхăннă ытти ыйтăва çăмăллатма пулăшасси.

Граждансене хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерес тĕлĕшпе Раççей Президенчĕ тата Чăваш Республикин Пуçлăхĕ тĕрлĕ программа кăларчĕ. Çак программăсем районта туллин вăя кĕрсе пыраççĕ. Çавна май районти çамрăк çемьесем, ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем тата ытти категори граждансем тĕрлĕ çăмăллăхсемпе, субсидисемпе усă курса çурт-йĕрлĕ пулаççĕ. Çакăнта район администрацийĕн пуçлăхне Ростислав Николаевич Тимофеева ырăпа асăнса хăварас килет. Ĕçе пуçăннă кĕске тапхăр хушшинче вăл çурт-йĕр çĕклес тĕлĕшпе патшалăх шайĕнчен уйăракан пулăшăва район аталанăвне ытларах явăçтарма пултарчĕ. Çавăн пекех капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕ те пирĕн хăш-пĕр ыйтăва татса пама пулăшать. Нумай хваттерлĕ çуртсем çĕклессинче тата çакăнпа çыхăннă ытти ĕçсене пурнăçлассинче "Россельхозбанкăн" районти хушма офисĕпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр.

**– Çĕнĕрен çурт-йĕр çĕклесси пур çĕрте те пĕр тапхăр уксахлама пуçланăччĕ, ку вăл, паллах, тĕнчери финанс кризисĕпе çыхăнчĕ пулĕ?**

– Çапла, çав йывăрлăха пула организаци пачах та тупăшсăр ĕçленĕ тапхăрсем те пулнă, çапах та çурт-йĕр çĕклес ĕçе районта чарса лартман, строительство калăпăшне те чакарман. Çакă эпир тупăш тăвассишĕн кăна мар, район аталанăвĕшĕн, сăн-сăпачĕшĕн, çынсен ыйтăвне тивĕçтерессишĕн тулли хăватпа ĕçленине тепĕр хут çирĕплетет. Чи пĕлтерĕшли вара – çурт-йĕрлĕ пулас текен çын çĕнĕ хваттерте хăйне ăшă та меллĕ туйтăр.

Маларах асăннă финанс кризисĕн йывăр вăхăтне эпир хыçа хăвартăмăр тесе шухăшлатăп. Халĕ пирĕн патра шăпах çак тапхăра чăтса иртернĕ пултаруллă та тÿсĕмлĕ 49 çын ĕçлет. Вĕсен пĕрлехи тăрăшулăхне кура районта строительство ĕçĕ ăнăçлă юхăмпа пырать. Тĕрлĕ специалистлă коллектив пĕр объект вĕçне тухиччен теприне пуçлать – эпир ĕççĕр лармастпăр. Нумай хваттерлĕ çурт никĕсне хывнă хыççăн ăна туянас текенсене те явăçтаратпăр.

Акă иртнĕ хĕл Гагарин урамĕнчи çирĕм тăватă хваттерлĕ 18-мĕш çурта çĕнĕ технологипе усă курса çĕклерĕмĕр. Газосиликат блоксем, кантăк пакетсем, хваттерсене кашнине уйрăммăн хутса ăшăтасси – йăлтах паянхи кун ыйтăвне тивĕçтерекеннисем. Унччен малтан Парковая урамри 4-мĕш çурт (икĕ пин çурă ытла тăваткал метр) вăя кĕчĕ. Халĕ çак урамри 6-мĕш çурта çĕклессипе тимлетпĕр, ача-пăча вылямалли тÿремсем те тăватпăр.

**– Хваттерсĕр пуçне эсир мĕн сĕнме тата мĕнле услугăпа тивĕçтерме пултаратăр?**

– Çавăн пекех пирĕн строительсем районти хуçалăхсен, организацисен, уйрăм çынсен çурт-йĕрне тĕпрен çĕклеме, юсама, реконструкци тума пулăшаççĕ. Унсăр пуçне хăватлă, ятарлă техникăпа – кранпа, экскаваторпа тата ыттипе тивĕçтеретпĕр.

**– Шалу укçи тĕлĕшĕнчен кăмăллă-и кунти специалистсем?**

– Паллах, укçа-тенкĕ вăл нихăçан та çителĕклĕ пулмасть. Çапах та пирĕн коллективăн ку тĕлĕшпе кÿренмелли çук пулĕ тетĕп. Ĕçленĕшĕн вăхăтра тÿлетпĕр. Унсăр пуçне социаллă тÿлевсем вăйра тăраççĕ.

**– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх коллектив спорт ăмăртăвĕсене те кăмăллать, вĕсене активлă хутшăнать тата ку енĕпе ыттисене те пулăшать.**

– Спорта кăмăлласси самай малтан пуçланнă. Кунта маларах ертсе пынă, Хура тăпраллă мар зонăри агропромстройăн тава тивĕçлĕ строителĕ Николай Гусак ячĕллĕ парнене çĕнсе илессишĕн волейбол турнирĕ иртернĕ, анчах та çакă тĕрлĕ сăлтава пула вăхăтлăх чарăннă. Халĕ вара эпир хастар ертÿçĕне сума суса çак ĕçе çĕнĕрен вăя кĕртрĕмĕр.

Бокспа хоккей енĕпе ăмăртусене хутшăнакансене пулăшасси те йăлана кĕнĕ. Организацин спорт залĕнче бокс секцийĕ ĕçлет. Ăна СССР спорт мастерĕ С. Черкашин тренер иртерет. Кунта вырăнта ĕçлекенсем кăна мар, çывăх шкулсенчи, ялсенчи çамрăксем те çÿреççĕ.

**– Уяв умĕнхи калаçура организаци историне асăнса хăварсан та ытлашши пулмĕ.**

– МСО коллективĕ 1959-мĕш çултанпа ĕçлет. Унтанпа вăхăчĕ самай иртрĕ. Чи малтан вара паянхи организаци "Колхозсем хушшинчи строительство материалĕсен завочĕ" ятпа ĕçлеме пуçланă. Эпĕ коллектива пиллĕкмĕш çул ертсе пыратăп. Çапах та Муркашри МСО ăнăçлă ĕçленĕ тапхăр Николай Александрович Гусак ертсе пынă (1976 – 1999) çулсене тивет. Çак вăхăтра асăннă организацин пĕтĕмĕшле бази аталаннă: администраци, амбулатори çурчĕсем, ача-пăча сачĕсем, спорт залĕсем, силос траншейисем, общежитисем çĕкленнĕ – çаксем йăлтах эпир паян усă кураканнисем.

Николай Александровича пĕр вăхăтра тимленĕ, хисепе тивĕçнĕ ĕçченсене те ятран асăнса хăварас килет. Вĕсем çаксем: Е.М. Андреева, Г.Е. Яндимиркина, Л.И. Яндимирова, М.И. Хошкин.

**РЕДАКЦИРЕН**. **Владислав Николаевич Семенов "МСО "Моргаушская" акционерлă хупă обществăна ертсе пынă май район аталанăвне пысăк тÿпе хывать. Манăн сăмахсен тĕрĕслĕхне вара унăн çитĕнĕвĕ те çирĕплетет. Çак кунсенче çамрăк ертÿçĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕнчен Михаил Игнатьевран Тав çырăвĕ илчĕ. Çавна май Владислав Николаевича малашне татах та пысăк çитĕнÿсем тума, район сăн-сăпачĕшĕн тимлеме вăй-хăват сунар. Сирĕн тăрăшулăхпа çĕнĕ çурт-йĕр ытларах çĕклентĕр, вĕсенче хăтлăх хуçалантăр.**

**ХИСЕПЛĔ СТРОИТЕЛЬСЕМ, ÇАК ĔÇĔН СУМЛĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Эпĕ çак ĕçре тимленĕ май сире пурне те професси уявĕпе – Строитель кунĕ ячĕпе чунтан саламлатăп!**

**Каламасăрах паллă, ĕçĕ чăннипех те йывăр та кăткăс тата сумлă, мĕншĕн тесен професси ял-хулашăн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мĕн пур çурт-йĕр, объект йăлтах строительсен аллипе çĕкленнĕ, епле кăна кăткăс ĕç çук пулĕ кунта. Апла пулсан хăтлăх пирĕн профессипе тачă çыхăннă.**

**Манăн чи малтан çурт-йĕр çĕклес ĕçпе тачă çыхăннă хисеплĕ ветерансене тав тăвас килет. Эсир пуçарнă тата пире вĕрентнĕ ĕç яланах пысăк пахалăхлă пулĕ. Çавăн пекех район инфраструктурине аталантарасси те пĕрлехи тĕллевех юлĕ. Пирĕн, паян тăрăшакан специалистсен, сирĕнтен вĕренмелли чылай. Эпир сире тĕслĕхе илетпĕр.**

**Хисеплĕ строительсем, пурне те çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатăп.**

**В.Н. СЕМЕНОВ.**



**Çакăн пек илемлĕ çуртсем çĕклеççĕ вĕсем.**

*Строитель ĕçĕнче чылай çул тимлекенсем:*
*Г.Е. Петров – 1974 çултанпа*
*Л.Е. Хошкина – 1976 çултанпа*
*В.Б. Суворова – 1977 çултанпа*
*Т.А. Тимофеева – 1977 çултанпа*
*П.А. Аргандеев – 1978 çултанпа*
*В.А. Золототрубова – 1980 çултанпа*
*В.В. Сюльдеркин – 1980 çултанпа*
*Г.М. Пшанов – 1984 çултанпа*
*А.В. Суворов – 1984 çултанпа*
*А.В. Игнатьев – 1987 çултанпа*
*Р.М. Романова – 1990 çултанпа*



**Сăн ÿкерчĕкре: строительсен ушкăнĕ: В. Иванов, Е. Мясников, Г. Сюльдеркина, Г. Петров, Л. Кошкина, В. Патрикеев.**

Кăларăма
Р. МАКАРОВА
хатĕрленĕ.

# Пĕрлехи вĕçев ăнăçлă иртнĕ

**Космос паттăрĕсем**

***Паян уйрăмах паллă кун. Тĕнчере пĕрремĕш хут Совет Союзĕн летчик-космонавчĕсем – пирĕн ентеш Андриян Николаев тата Павел Попович «Восток-3» тата «Восток-4» карапсемпе тĕнче уçлăхĕнче пĕрлехи вĕçев ирттернĕренпе 50 çул çитрĕ. Çак вĕçев пирĕн çĕр-шывăн кăна мар, пĕтĕм этемлĕхшĕн те питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăнă, мирлĕ тĕллевпе космоса тĕпчессипе малалла татăклă утăм тунă.***



Пирĕн ентеш А.Г. Николаев тытса пыракан «Восток-3» космос карапĕ тĕнче уçлăхне 1962 çулхи августăн 11-мĕшĕнче 11 сехет те 30 минутра çĕкленнĕ. Вăл 4722 килограмм тайнă.

Орбитăна тухсан Андриян Григорьевич вĕçевĕн космос программине пурнăçлама пуçăннă. Вăл кăткăс та анлă пулнă, тĕрлĕрен тĕпчевсемпе сăнавсем ирттерме тивнĕ. Çĕр чăмăрĕ тавра çаврăм хыççăн çаврăм тунă май Андриян Николаев хăйĕн юлташĕ Павел Попович космоса çĕкленессе кĕтнĕ. Ку вăл тепĕр талăкран пулса иртнĕ.

1962 çулхи августăн 12-мĕшĕнче 11 сехет те 2 минут та 33 çеккунтра «Восток-4» космос карапĕ старт илнĕ. Ăна П.Р. Попович тытса пынă.

Тĕнчере пĕрремĕш хут совет космонавчĕсем тытса пыракан «Восток-3» тата «Восток-4» космос карапĕсен ушкăнри пĕрлехи вĕçевĕ пуçланнă. Пĕрлехи вĕçевĕн тĕп параметрĕсене çаксене асăнмалла. Вăтам шутпа илсен вĕçев 180 километр çӳллĕшĕнче иртнĕ, космос карапĕсем çеккунтра 7,8 километр ытларах хăвăртлăхпа вĕçнĕ, чи сахалли карапсем пĕрпĕринчен 6,5 километр инçĕшĕнче пулнă.

Пĕрлехи вĕçев вăхăтĕнче Андриян Григорьевич майорпа Павел Романович подполковникăн медицинăпа биологи, наукăпа техника ыйтăвĕсемпе çыхăннă тĕрлĕ сăнавсемпе тĕпчевсем сахал мар иртterме тивнĕ: чылай вăхăт космос вĕçевĕнче пулни, уйрăмах невесомосĕре пулни çыннăн физикăлла тĕп функцийĕсем çине мĕнле витĕм кӳнине, çын хăйне психика тĕлĕшĕнчен мĕнле туйнине, космонавтсем вĕçевĕн тĕрлĕ участокĕсенче мĕнле ĕçлеме пултарнине тĕпчесси, космонавтсене суйласа илессин тата тренировкăсем йĕркелессин эффективлă мелĕсене палăртасси, икĕ экипаж вĕçев вăхăтĕнче килĕштерсе ĕçлессин мелĕсем, космос карапĕсен пур конструктор элеменчĕсен эффективлăхне уçса парасси т. ыт. те. Палăртнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлани малашне ученăйсене, конструкторсене тата космонавтсене малашлăх тĕллевĕсене пурнăça кĕртессипе ĕçлеме çул уçса панă. Кусем вĕçем космос вĕçевĕсен вăхăтне ӳстерессине, космос карапĕсем орбитăра тĕп пулса пĕр-пĕринпе сыпăнасси, нумай вăхăтлăх орбита станцийĕсем туса хатĕрлесси т. ыт. те.

Августăн 15-мĕшĕнче космонавтсем космос вĕçевĕнчен таврăннă. Унччен палăртнă пекех вĕсем тата хăйсем тытса пыракан космос карапĕсем Казахстанра Караганда облаçĕнче анса ларнă. А.Г. Николаев Каркаралинск хулин районĕнче 9 сехет те 52 минутра, П.Р. Попович Атасу поселокĕ çывăхĕнче 9 сехет те 59 минутра Çĕр çине аннă.

Шутлав центрĕ палăртнă тăрăх «Восток-3» карапăн вĕçев инçĕшĕ 2639600 километрпа, «Восток-4» карапăн 1982050 километрпа танлашнă. А.Г. Николаев космос вĕçевĕнче 94 сехет те 9 минут та 59 çеккунт, П.Р. Попович – 70 сехет те 43 минут та 48 çеккунт пулнă. Пĕрлехи вĕçев 70 сехет те 23 минут та 38 çеккунта тăсăлнă, вĕçев инçĕшĕ 1 миллион та 975 пин те 200 километрпа танлашнă.

Çапла вара А.Г. Николаевпа П.Р. Попович космосра ушкăнпа вĕçессин тапхăрĕ тата унăн инçĕшĕ енĕпе пĕрремĕш тĕнче рекорчĕсем тунă.

Андриян Николаевпа Павел Поповичăн пĕрлехи ушкăнри вĕçевне космоса тĕпчес енĕпе тĕнче шайĕнче те пысăка хурса хакланă. Пĕтĕм тĕнчери авиаци федерацийĕ космонавтсене «Космос» ылтăн медальпе наградăланă. СССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Указĕпе летчик-космонавтсене А.Г. Николаевпа П.Р. Поповича Совет Союзĕн Геройĕн ятне, Ленин орденĕпе «Ылтăн Çăлтăр» медаль панă.

# Хамăр çине ытларах шанас пулать

**Ялти пурнăç ял çыннинчен килет**

«Ялти пурнăç ял çыннинчен килет» рубрикăпа «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ ял çыннисене хăйсен пурнăçне лайăхлатма тăрăшман, умра тухса тăракан ситменлĕхсене, çак пурнăçри пăтăрмахсене вăхăтра пĕтермен пуçлăхсен пирки те хаçатра çырма сĕннĕччĕ. Çавна шута илсе манăн та хаçата çырас шухăш çуралчĕ.

Ялти пурнăç ял çыннинчен килет тени тĕрĕсех ĕнтĕ. Анчах та ял çынисенчен кăна-и? Ял пурнăçне илес пулсан мĕн авалтан кашни ял вăл пĕр çемье пек пурăннă. Кашни çемье, паллах, хăйсен пурнăçне йĕркелес тесе те тăрăшнă. Сухаланă, акнă, авăнне çапса тырри те тасатса типĕтнĕ.

Авăртма вара армана кайма лекнĕ. Пирĕн таврара ытларах шыв арманĕсем пулнă. Арман пĕвисене çулсеренех çурхи шыв татса кайнă. Çур аки ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн çак пĕвесене ял халăхĕ тухса ниме туса пĕвеленĕ. Арманĕ кашни çемьене кирлĕ вĕт-ха!

Е тата çăл куçсене еплерех упранă. Валакĕ те, валашкисем те йывăçран пулнă, вĕсене тумалла пулсан пĕтĕм ял-йыш унта пухăннă. Çăлсем йĕри-тавра йăмрисене те лартнă, шывне те пăхса тăнă...

Ял кĕтĕвне кĕтме кĕтӳçĕ тытмалла пулсан та ял çыннисем пĕрле канашласа калаçса татăлнă. Колхозсем тунă хыççăн та çак йĕркесене çирĕп пăхăнса пынă. Малтанхи вăхăтра ялсенче старостăсем çирĕп йĕрке туса пынă пулсан, çак ответлă ĕçе кайран бригадирсем йĕркелетчĕç. Çулсене шыв-шур çурса кайнă вырăнсене те вăхăтра юсаттаратчĕç, уй-хирсенчи шырлансене тӳрлетсе тăратчĕç. Урамсене тирпей-илем кĕртес ĕçсене те бригадирсем йĕркелетчĕç. Килти çӳп-çапа урама е çырмана, вăрмана кайса пăрахма никамăн та ирĕк пулман. Е тата эрех ĕçекен, «кукăр алăллă» этеме пĕтĕм ял халăхĕ сивлетчĕ.

Пурнăç улшăннă май ял çыннисен пурнăçĕ те, пурнăç йĕрки те урăхланчĕ. Колхозсем арканнă май бригадирсем те çук. Ĕлĕкхиллех ял старостисем патне каллех çитсе тухрăмăр. Анчах та паянхи ял старостисем унччен пулнă старостăсенчен уйрăлса тăраççĕ. Патша влаçĕ вăхăтĕнчи старостăсем шалу укçи илсе тĕрлĕрен пулăшусемпе усă курнă пулсан, хальхисем вара пачах урăхла. Вĕсен пĕтĕм ялти халăх валли пурнăçламалли ĕçсене пĕр пус укçасăрах туса пымалла. Çав вăхăтрах телевизорпа та, ытти йышши массăллă информаци хатĕрĕсемпе те ялан укçа пирки анчах сӳпĕлтетеççĕ. Укçана ĕçлесе илме мар, укçана тума вĕрентеççĕ. Уйрăмах çакă вăл çамрăк ăрăва тĕрĕс воспитани парас ĕçре калама çук пысăк сиен кӳрет. Патриотизм, энтузиазм текен сăмахсен пĕлтерĕшĕсем кайри вырăна тухса юлчĕç.

Манăн пĕр тĕслĕх çинче чарăнса тăрас килет. 1976 çулта хамăр ялти шкула çӳрекен ачасемпе калаçнă хыççăн ял варринче Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнĕ ял паттăрĕсене чысласа парк тума шутларăмăр. Ачасен вăйĕпе çав çулах çурхунне пĕр гектара яхăн лаптăк çинче йывăççем лартса хăвартăмăр. Лартмалли йывăççене лесничествăсенчен, вăрмантан илсе килтĕмĕр. Лартнă лаптăк йĕри-тавра пралуксемпе каркаласа картиш пекки те турăмăр.

Çăмăл пулмарĕ çав йывăççене çитĕнтерме. Çитменнине тата йывăççем лартнă вырăн ирсерен кĕтӳ пухăнмалли вырăнччĕ. Ял халăхĕ, уйрăмах ватă çынсем, малтанхи вăхăтра çак кирлĕ ĕçе ăнланмарĕç. Вара çине тăрсах 1980 çулта паркăн пĕлтерĕшне халăха кăтартас тесе хамăр вăйпах палăк турăмăр, ăна майăн 8-мĕшĕнче касхине уçма май килчĕ.

Унченхи ял тăрăхĕн пуçлăхĕ паркри йывăççене санитари тĕлĕшĕнчен тасатассипе касма ирĕк панăччĕ. Вара касакансем çакăнпа усă курса парка самаях сиен кӳчĕç. Йĕркеллĕ çирĕп çăкасене те шеллемерĕç.

Хальхи вăхăтра каснă йывăççем вырăнĕнче вĕтлĕх алхасать, витĕр утса тухма та май çук. Йывăççене каснă хыççăн ун чухнехи пуçлăх урам енчен картине тутарчĕ, анчах та тепĕр висĕ енчи карти паянхи куна та çук. Ял тăрăхĕн пуçлăхне кун пирки пĕр хутчен кăна мар астутарнă, анчах усси çук. Çавна май парк халĕ юрăхсăра тухса пырать.

Тата тепĕр тĕслĕх. Туçи Олкаш ялĕ патĕнче тарăн çырмасем пурччĕ. 3 гектара яхăн лаптăк çинче йывăççем лартрăмăр, карта тытрăмăр. Халĕ кунта хыр вăрманĕ кашлать. Анчах та юлашки вăхăтра çывăхра пурăнакан çынсем кунта çӳп-çап тăкма пуçăнни питĕ пăшăрхантарать.

Пĕвесем пирки те каласа хăвармалла. Ытларах çĕрте вĕсем çине тимлĕх уйăракан çук, çавăнпа та вĕсем юрăхсăра тухса пыраççĕ.

Апчарпа Турри Олкаш ялĕсем хушшинче тарăн çырма пур. Хăй вăхăтĕнче районти «Сельхозхими» пĕрлешĕвĕн вăйĕпе кунта висĕ пĕве тунăччĕ. Пĕве пусĕпе çынсем иртсе çӳрекен пĕвине икĕ çул каялла спонсорсем тупса реконструкци тума май килнĕччĕ. Шахтине те хăпартрăмăр, пĕвине те çӳллĕлетсе çыранĕсене тикĕслерĕмĕр. Шыва кĕме хăмаран ятарласа площадка та туса патăмăр. Шывĕ вара таса та тăрă.

Çакăн пек ырлăх часах Мăн Сĕнтĕр çамрăкĕсене илĕртме пуçларĕ. Халĕ вара кунта та тасамарлăх: полиэтилен, тĕрлĕ кĕленче, ытти тасамарлăх. Ильинка ял тăрăхĕ ку пĕве шăпипе пачах та интересленмест.

Ман шутпа ял пурнăçне лайăхлатас, çынсене пурăнма кирлĕ пек условисем туса парас ĕçре ытларах ял тăрăхĕсен ĕçченĕсен пуçарулăх кăтартмалла. Хальлĕхе вĕсем ял çыннисем хушшинче сахал пулаççĕ. Ял çыннисен активлăхне ӳстерессипе пĕрлехи пухусем ирттерни те пĕлтерĕшлĕ самант пулса тăрать.

Эпĕ хамăн шухăшсене çакăнта усă патăм. Мĕн шутлаççĕ-ши кун пирки ытти ялсенче пурăнакансем? Хаçатра кун пирки çырса пĕлтерессе шанатăп.

**П. ВОРОБЬЕВ.**

Мăн Сĕнтĕр ялĕ.

**Республикăра**

## Экономика канашне йĕркеленĕ

**Чăваш Ен умĕнче тăракан стратеги пĕлтерĕшлĕ экономикăпа социаллă аталану задачисене ăнăçлă татса парас тĕллевпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕ çумĕнчи Экономика канашне йĕркелеме йышăннă. Ун çинчен калакан 88 № Указа республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев 2012 çулхи августăн 3-мĕшĕнче алă пуснă.**

ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх, канашăн тĕп задачисем шутне Чăваш Республикин экономикăпа социаллă аталану задачисене пурнăçлассипе стратеги çулĕсене палăртасси тата проблемăллă ыйтусене татса парасси, ку тĕлĕшпе стратегипе тактика мелĕсене палăртасси, экономикăн тăнăç аталанăвĕпе технологи çĕнĕлĕхĕсене пурнăça кĕртессине тивĕçтерессе пулса тăраççĕ.

Ĕç тăвакан влаç органĕсен представителĕсемсĕр пуçне канаш йышне республика Патшалăх Канашĕнчи политика партийĕсен фракцийĕсен ертӳçисем, обществăлла организацисемпе бизнес-сообщество представителĕсем кĕреççĕ.

Канаш йышăнăвĕсене пурнăça кĕртме Чăваш Ен Пуçлăхĕ указсем кăларма тата йышăнусем тума пултарать.

Канаш йышăнăвĕсене влаç органĕсемпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем патне çитерĕç, Чăваш Ен Пуçлăхĕн официаллă сайтĕнче тата Интернетăн информаципе телекоммуникаци сетĕнче Чăваш Республикин влаç органĕсен порталĕнче вырнаçтарĕç.

## Çамрăк учительсене – çăмăллăх

«2012–2020 çулсенче Чăваш Республикинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕрентӳ учрежденийĕсенче вăй хуракан çамрăк учительсене çурт-йĕрпе тивĕçтересси» республикăри тĕллевлĕ программăна республикăн Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче хатĕрленĕ постановлени проектне хушса тултармаллине палăртнă. Çак проект постановленийĕ Республика Пуçлăхĕ июнĕн 21-мĕшĕнче алă пуснă указне пурнăçлассипе çыхăннă. Пĕлтĕр декабрьте вара учительсене ипотека кредитне каялла тавăрса парассинчи çăмăллăхсем пирки Раççей Федерацийĕн Правительствин 1177 № постановленине çирĕплетнĕччĕ.

Çапла майпа пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма çамрăк учительсене патшалăх çакăн евĕр пулăшу парать: ипотека кредичĕн пĕрремĕш тӳлев пайне кредит суммин 20 процентĕ таран саплаштарса; кредит процентĕн çулталăка палăртса хунин 4 процентĕ чухлĕ тӳлевне малтанхи 10 çул хушши саплаштарса.

Программăна пурнăçлама (2012 – 2020 çулсенче) федераллă бюджетран 100885,6 пин тенкĕ (31,9 процент), республика бюджетĕнчен 215643,0 пин тенкĕ (68,1 процент) уйăрма палăртнă. 2012 çул валли пĕтĕмĕшле 18235,6 пин тенкĕ уйăрнă.

**Чăваш Республикин влаç органĕсен официаллă порталĕнчен.**

## Йыш хушăнать

Кăçалхи январь – июль уйăхĕсенче Чăваш Енре ача çуратасси пĕлтĕрхи çав тапхăртинчен 12,4 процент пысăкланнă. 100 çын пуçне 13,6 ача çуралнă. Раççейри 6 уйăхри вăтам кăтарту – 12,7, Атăлçи округĕнче – 12,7. Çакăн пирки пĕлтерчĕ ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Татьяна Богданова.

Çынсем вилессин пĕтĕмĕшле кăтартăвĕ 4,4 процент таран чакнă, 1000 çын пуçне 13,1 çын çĕре кĕнĕ. Раççейри 6 уйăхри вăтам кăтарту 13,5, округра – 14.

Чăваш Енре халăх йышĕ хăй тĕллĕн чакни (2011 çулхи январь – июль уйăхĕсенче 1000 çын пуçне 1,6 пулнă) йыш ӳсĕмĕпе улшăннă, 2012 çулхи январь – июль уйăхĕсенче +0,5 çитнĕ. 6 уйăхра Раççейре вăтамран йыш чакасси 0,8-пе, Атăлçи округĕнче 1,3-пе танлашнă.

**Спорт та, кану та**

## Туслă пурăнаççĕ

Августăн 7-мĕшĕнче «Çут çанталăк пĕтĕмпех тăвать тата пĕтĕмпех пултарать» проектпа килĕшӳллĕн Çĕньял Хуракасси плотини хĕррине инвалидсемпе инвалид ачасен «Тытăн пулă, пысăкки те, пĕчĕкки те» районти конкурсĕ иртнĕ. Ăна Пĕтĕм Раççейри инвалидсен обществин районти организацийĕ районти социаллă хӳтлĕх пайĕпе тата çынсене социаллă пулăшу паракан центрпа пĕрле йĕркеленĕ.

Инвалидсем тавралăх илемĕпе туллин киленме пултарнă. Программăра вара пулă тытасси кăна мар, ытти хаваслă конкурссем те пулнă.

Пулăран хатĕрленĕ кулинари изделийĕсен конкурсĕ интереслĕ иртнĕ. Кунпа пĕрлех инвалидсем шашкăлла та вылянă, дартс енĕпе те ăмăртнă.

Конкурс итогĕсемпе пулăççен ăмăртăвĕнче 3,1 килограмм пулă тытса Ю. Щеголько мала тухнă. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – А. Николаева (2,6 кг) тата И. Анисимова (2,5 кг). Кулинари изделийĕсен конкурсне хутшăнакансем пурте хавхалантару призĕсене тивĕçнĕ. Шашкăлла выляссипе вара Р. Николаева тата В. Павлов призлă вырăнсене çĕнсе илнĕ.

Мероприятие хутшăнакансене район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова саламланă, малашне те активлă пурнăç йĕркине тытса пыма сĕннĕ.

Плотина хĕрринче çакăн пек культурăллă канма май туса панипе инвалидсем питех те кăмăллă юлнă.

**Хамăр инф.**

# «Спорта юратни туслăха татах та çирĕплетет»

**Паян – Физкультурник кунĕ**

***«Халиччен те ĕçе килес килменни пулман, çак кăмăл ан пĕттĕр те», – çапла калать Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтернĕренпе Муркашри вăтам шкулта физкультура урокĕсене 30-мĕш çул ертсе пыракан Зоя Григорьевна Углева. Творчествăлла ĕçлекен хастар учитель спорт маçтăрĕн кандидачĕ те, йĕлтĕр чупăвĕсенче республика чемпионĕн ятне те пĕрре мар тивĕçнĕ, республикăн пĕрлештернĕ командинче пулнă.***

***Пуян опытлă та çирĕп кăмăллă вĕрентекенпе Физкультурник кунĕ умĕн тĕл пултăмăр.***



**– Зоя Григорьевна, физкультурăпа спорт вăл сирĕн професси кăна е çакă сирĕн пурнăç йĕрки те?**

– Пурнăç йĕрки тесен тĕрĕсрех пулать пулĕ. Пире ачаранпах спорта çывăх ӳстернĕ. Аттене астумастăп, эпĕ пĕчĕк чухнех вăл çĕре кĕнĕ. Анне вара пире, тăватă ачине, çунашкайĕлтĕртен уйăрман тесен те юрать. Çак хатĕрсем, йывăçран тунă конькисем кашнинех пулнă. Пĕрин ванать-хуçăлать пулсан тепринпе те ярăннă. Кил хапхи умне çунапа пырса кĕме тесе пире анне çул тутарчĕ. «Ачасем, йĕлтĕрсене сырăр та кил умĕнчи юра таптаса тухăр», – тесе мĕн тери тĕрĕс тунă вăл. Халĕ те, тепĕр чухне физкультура урокĕсем хыççăн ывăнатăп пулсан та, активлă канма тăрăшатăп. Çемйипех активлă канăва килĕштеретпĕр. Пĕрле йĕлтĕрпе ярăнма, ишме çӳретпĕр, хоккейла, волейболла выляма килĕштеретпĕр.

**– Шкулта чылай çул вăй хуратăр. Ĕçри пĕрремĕш ăнăçу мĕнле пулнă? Ăна чылай кĕтме тивнĕ-и?**

– Вунă çул шкулта ĕçлени пĕр çул ĕçленĕ пек туйăнатчĕ. Ĕç колейине йĕркеллĕн тĕппипе кĕрсе çитме татах та чылай ĕçлемелле тесе шутлаттăмччĕ. Ăнăçу вара... Дима Григорьевшăн чăнах та савăнма пултаратăп. Вăл тăххăрмĕш класра вĕреннĕ чухне республика чемпионĕ пулса тăчĕ. Вĕсен класĕ те спорта кăмăллакансен класĕччĕ. 2003 – 2004 вĕренӳ çулĕнче физкультура класĕсен республикăри пĕрремĕш смотрĕнче иккĕмĕш вырăн йышăнтăмăр, Раççейри вуннăмĕш смотрта – 10–11-мĕш пултăмăр.

Халĕ хам вĕрентнĕ ачасен ачисем шкулта вĕренеççĕ. Ашшĕ-амăшĕсене вĕрентнĕрен вĕсемпе ĕçлеме те хăйне май интереслĕ. Çитес вĕренӳ çулĕнче 7 «б» класа килекенсем те акă спорта çывăх. Вĕсене çак çулпа татах та интереслентерсе ярас кăмăл пысăк манăн. Чăваш Енре çулсеренех Президент ăмăртăвĕсем, халĕ республика Пуçлăхĕн ăмăртăвĕсем иртеççĕ. Çавăнта хутшăнмаллах пирĕн, хатĕрленмелле.

**– Майсем çителĕклĕ-и?**

– Спорт оборудованийĕ тĕлĕшпе ку вĕренӳ çулне федераллă программăпа килĕшӳллĕн пирĕн шкула та çĕнĕ оборудовани сахал мар килмелле. Шкулта пĕр вăхăтра 50 ача физкультура урокне тухать. Йĕлтĕрсене нумайăшĕ хăйсенне илсе килет, анчах та шкултисем те кивелеççĕ. Уроксем хыççăн ĕçлетпĕр – секцисем сахал мар, спортзал та нихăçан та пушă тăмасть. Тренерсемпе килĕштерсе ĕçлетпĕр. Шкулти завучпа, директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕпе те тачă çыхăнура ĕçленине палăртса хăварас килет. Ачасен физкультурăна, спорта юратма хавхалану пултăр тесе тăрăшатпăр.

**– Эсир тата районти физкультура учителĕсен методпĕрлешĕвĕн ертӳçи те.**

– Çапла, 10 çул ытла ĕнтĕ. Çулсеренех ятарлă курссенче пулса опыта пуянлататпăр. Вĕренӳ çулĕнче тăватă хутчен районти шкулсене тухса уроксенче пулатпăр. Çамрăкрах учительсене сĕнӳ пани ытлашши мар пулĕ тесе шутлатăп. Хамăрăн методикăпа паллаштаратпăр, документацие йĕркеллĕ туса пыма та пулăшатпăр.

**– Ачасене халĕ спорта явăçтарма йывăртарах мар-и? 20–30 çул каялла шкулта вĕреннисем спорт енĕпе пуçаруллăрах пулман-и?**

– Ун чухне ачасем хăйсем килетчĕç. Йĕлтĕрсем çитместчĕç... Лайăх результатсем вара пурпĕрех пулатчĕç. Плечова, Юркина, Моисеева... – çак хушаматсене Муркашра кăна мар, çĕр-шывĕпех пĕлеççĕ.

Халĕ ытларах ашшĕ-амăшĕпе те ĕçлеме тăрăшатăп: калаçусем сахал мар ирттеретпĕр. Ачасене спорта, физкультурăна явăçтармалла, ĕçлеттермелле, активлă канма хăнăхтармалла – çакă чи тĕрĕс çул. Ашшĕ-амăшĕсем пире ăнланни савăнтарать.

Эпир, физкультура учителĕсем, халĕ иккĕмĕш класран пуçласа физкультура урокĕсене ирттеретпĕр. Çак ачасем хушшинче пулас спортсменсене тӳрех уйăрса илме пулать. Çулла хыççăн килсен, вĕренӳ çулĕ пуçлансанах ачасене тĕрĕслетпĕр, çулла физкультура тĕлĕшпе активлă пулни тӳрех палăрать. Кашни ачан, кĕçĕнреххисем пирки калас пулсан, обруч, скакалка, мечĕксем пулмаллах. Ку вăл чи сахалли. Анчах та питĕ усăллă хатĕрсем.

**– Сире вара хăвăра спорта кам явăçтарнă?**

– Тойкилтĕри шкултан аслă классене Турай шкулне вĕренме кайнă эпĕ. Вĕрентекенсене – Галина Федоровнăпа Валерий Гаврилович Гавриловсене, кӳршĕри Геннадий Максимович Петрова паян кун та тав сăмахĕ калатăп, яланах ырăпа аса илетĕп вĕсене. Сывлăхĕсем çирĕп пулччăр вĕсен.

**– Физкультурăпа спортсăр пуçне эсир тата мĕнпе кăсăкланатăр?**

– Эпĕ çыхма, вулама питĕ кăмăллатăп. Аслă классенче вĕреннĕ чух вăрах вăхăта та сборсене тухса кайма тиветчĕ. Кĕнеке вулама та вăхăт çитместчĕ. Халĕ çавăн чухне вуламалли литературăна тепĕр хут вуласа кăмăла тивĕçтеретĕп.

**– Сирĕн шутпа пурнăçра çыншăн чи кирли, чи пĕлтерĕшли мĕн?**

– Çемье. Çемьере пурте йĕркеллĕ пулсан ĕçре те ăнăçусем тума çăмăлрах. Çапла чухне хăпартланса ĕçлеме те кăмăл пысăкрах. Мана мăшăр Евгений Петрович яланах ăнланса пулăшса пырать. Вăл маншăн пысăк тĕкĕ. Ачасем те савăнтараççĕ. Катерина педиатр врач. Унăн хăйĕн çемье ĕнтĕ, ачи. Наташа – юрист, акăлчан чĕлхине алла илнĕ. Икĕ аслă пĕлӳ. Гриша МАДИ-ре вĕренет, 5-мĕш курс студенчĕ. Вăл та çемьеллĕ. Пирĕн çемье туслă, эпир спорта юратни вара туслăха татах та çирĕплетет.

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

# Майсем пур, пуçаруллăрах пулар

Спорт енĕпе пăхас пулсан район администрацийĕн спортпа туризм секторĕн ĕçĕн тĕп пайĕ район администрацийĕпе, ял тăрăхĕсемпе тата физкультурăпа спорт организацийĕсемпе пĕрле çынсем хушшинче спорта сарасси тата вĕсене спорт мероприятийĕсем урлă сывă пурнăç йĕркине пропагандăлассипе тачă çыхăнса ĕçлесси пулса тăрать.

26 спортзал, 7 тир, В. Егорова ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ, унти йĕлтĕр бази, «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК» хушма пĕлӳ паракан учрежденийĕ тата 96 тӳрем спорт сооруженийĕсемпе площадкăсем çак ĕçе туса пыма май параççĕ. Нумай чух пуçарулăх ытларах кирлĕ кăна. Паллах, физкультура учителĕсен, тренерсен ĕçĕ питĕ пĕлтерĕшлине каламалла. Вĕсем пуçаруллă пулнипе ĕнтĕ ачасемпе çамрăксем пĕчĕкрен спортпа туслашса каярах пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ.

Кунпа пĕрлех районта йĕркеленĕ спорт федерацийĕсен ĕçне асăнмасăр иртме çук. Уйрăмах волейбол, çăмăл атлетика тата хоккей федерацийĕсен пуçарулăхне палăртма кăмăллă.

Кашни çулах районта спортăн чылай енĕсемпе шкул ачисен, ĕç коллективĕсен спартакиадисене ирттеретпĕр. Бюджетпа пăхса хунă укçа-тенкĕне çителĕклĕ теме пулмасть. Çавăнпа та спортпа физкультурăра та укçа-тенкĕ ыйтăвĕ тухса тăрать. Çавна май ăмăртусене ирттерме пулăшакансем пурри хавхалантарать. Районти тĕрлĕ предприятиорганизаци ертӳçисем, уйрăм предпринимательсем пирĕн ыйтусене ăнланни савăнтарать. Районта массăллă спорта аталантарассинче вĕсен пулăшăвĕ палăрăмлă.

Ял тăрăхĕсенче те пуçаруçăсем пурри физкультурăпа спорта аталантарасси çине пысăк витĕм кӳрет. Вĕсем нумай чух хăйсем спонсăр пулса тăраççĕ. Мĕншĕн тесен ял тăрăхĕсенче спорт мероприятийĕсем ирттерме вăтамран 10–15 пин тенкĕ таран кăна уйăраççĕ.

Ял тăрăхĕсем тенĕрен Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенче çулсеренех спартакиадăсем ирттернине палăртмалла. Вырăнта пурăнакансен, ĕçлекенсен пĕр пайĕ çак ырă йăласене хăнăхсан ыттисем те туртăнаççĕ. Хушнипе мар, хăйсен ирĕкĕпе спорт мероприятийĕсене хутшăнни паха-çке-ха. Ытти ял тăрăхĕсене илес пулсан кашнинче тенĕ пекех кама та пулин, мĕне те пулин халалласа спорт ăмăртăвĕсем ирттернине те ырламалла.

Массăллă спорта, физкультурăна, апла пулсан сывă пурнăç йĕркине сарассипе кашнинех тăрăшмалла. Çакă вăл пĕччен е иккĕн тумалли ĕç мар – унăн калăпăшне, витĕмлĕхне кашни çын туйса тăтăр.

Районти пур физкультурника та, çак юхăмăн ветеранĕсене те, спортпа туслисене пурне те çирĕп сывлăхпа телей сунатăп. Массăллă спорта аталантарма пулăшакан ăмăртусен спонсорĕсене, спорта çĕнĕ ятсем кăларакансене самантпа усă курса пысăк тав сăмахĕ калас килет.

**В. ПЕТРОВ,**
**район администрацийĕн спортпа туризм секторĕн ертӳçи.**

# Ачасен çитĕнĕвĕ – тренер çитĕнĕвĕ

Нумаях пулмасть «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК» хушма пĕлӳ паракан учреждение ăсталăх пухакан боксерсем Чул хула облаçĕнчи пĕтĕм Раççей турнирне хутшăнчĕç. Спорт шкулĕнче çирĕм çула майлă ĕçлекен Сергей Черкашин тренерăн воспитанникĕсем «ылтăн» тата «кĕмĕл» çĕнсе илме пултарнă.

35 килограмлă виçе категорийĕнче Александр Кудряшов, 34 килограмлă виçе категорийĕнче Александр Никитин мала тухнă. 36 килограмлă виçе категорийĕнче кĕрешнĕ Андрей Пугачев пъедесталăн иккĕмĕш картлашки çине хăпарма пултарнă. Ачасен çитĕнĕвĕнче тренерăн тӳпи пысăк, çакна хирĕçлеме çук.

Муркаш боксерĕсем çинчен «Комсомольская правда» (кăçалхи июлĕн 19–26-мĕшĕсенчи номерĕнче) хаçат та çырчĕ: «Детский бокс по-взрослому» статьяра Муркашсен çитĕнĕвĕсене пысăк хак панă.

**Хамăр инф.**

**Асăрхаттару**

# Ан улталанăр

90 çул каялла çуралнă кинемее улталама нумай кирлĕ-и пире, тесе савăнаççĕ пулĕ халĕ 52 пин тенкĕ вăрласа тухса кайнă икĕ çамрăк арçын.

Августăн 7-мĕшĕнче Юнкăпуçĕнче пулса иртнĕ çак ĕç-пуç. Икĕ çамрăк арçын, пăхсан 25–30 çулхисем, хăйсене собес ĕçченĕсем тесе ялти пĕччен пурăнакан ватă кинемей патне кĕреççĕ. Электропроводка улăштарса пама, çĕнĕ обой çыпăçтарма шантараççĕ. Кивĕ телевизорпа холодильника та пысăкраххисемпе ылмаштарса парассине калаççĕ. Анчах та çакăншăн карчăкăн «малтанхи взнос» памалла иккен – 4 пин тенкĕ.

Çав укçана илсе тухас тесе карчăк хăйĕн вăрттăн вырăнĕ патне каять. Лешĕсем вара карчăк ăçтан мĕн тата мĕн чухлĕ илнине лайăххах курса тăнă. Пĕри «документсем» çине çырмалла тата алă пусмалла тесе кинемейрен уйрăлмасть, тепри çав вăхăтра карчăкăн «перекет банкне» çаратать – 52 пин тенкĕ. 90-ри кинемей 4 пин тенкĕне аллинче тытса укçана япаласене леçсе парсан тин тӳлесси пирки калать. Лешсем хăйсене мĕн кирлине алла илнĕ хыççăн килĕшеççĕ. Карчăк вара пурĕ те 4 пин тенкĕпе кăна тăрса юлать.

Çав икĕ арçын Шупашкарта та çакăн майлă «ĕçлесе» темиçе ватă çыннах улталама ĕлкĕрнĕ пулас: ют çĕр-шывра туса кăларнă шурă тĕслĕ машинăпа çӳрекенскерсене асăнакан пĕрре мар пулнă.

Ку хутĕнче те çав машина Юнкăпуç ял хĕрринче ларнă. Тен ăна куракансем, машина номерне астуса юлакансем пулнă? Е çыннисене хăйсене курса юлнă? Следстви ĕçне пулăшма пултаракан тупăнсан питĕ аван пулмалла. Атту çак «хастарсем» ирĕкре татах та çын айванлăхĕпе усă курса пуйма шутлĕç.

Çакăн пек суйса темĕн тĕрлĕ тавар сутакансем те, пенси фондĕнче, собесра ĕçлетпĕр текенсем те пулма пултараççĕ. Асăрханăр, айван ан пулăр. Пĕччен пурăнатăр пулсан киле те ан кĕртĕр. Вĕсем мĕнлине, мĕнле машинăпа çӳренине астуса юлма тăрăшăр, çийĕнчех полицие пĕлтерĕр.

**О. НИКОЛАЕВА,**
**районти полици пайĕн следователĕ.**

**Уяв**

# Мăн Сĕнтĕр райповĕ уяв парнелерĕ

Иртнĕ эрнере Мăн Сĕнтĕрте питĕ чаплă мероприяти пулчĕ – ООН йышăннă Пĕтĕм тĕнчери кооперации çулталăкне халалланă уяв çӳллĕ шайра та интереслĕ иртрĕ.

Пылак шывсене, çăкăр-булка, кăлпасси изделийĕсене, пылак апат-çимĕç тутанса пăхассине йĕркеленĕ Мăн Сĕнтĕрсем. Çемье династийĕсене те, райповăн Хисеплĕ çыннисене те чысларĕç уявра. Тавар туянакансенчен, эмел курăкĕ пухса паракансенчен, ял хуçалăх продукцине райпова паракансенчен чи активлисене палăртрĕç. Йăлара усă курмалли техника, апат-çимĕç продукчĕсем – райпо вĕсене темĕн тĕрлĕ хаклă парне парса савăнтарчĕ.

Çак куна Мăн Сĕнтĕрти «Стройхозтовары» лавкка тавар туянакансене çĕнĕ сăн-сăпатпа кĕтсе илчĕ. Унтах сĕтел-пуканăн çĕнĕ уйрăмĕ ĕçлеме пуçларĕ.

Мăн Сĕнтĕрсене район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Лаптев, Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ С. Павлов тата ытти ертӳçĕсем те саламларĕç. Уява ташă-юрă, тĕрлĕ вăйăсем илем кӳчĕç. Чаплă салютпа, чăваш эстрада артисчĕсен концерчĕпе, каçхи ташă каçĕпе савăнтарчĕ пухăннă халăха Мăн Сĕнтĕр райповĕ.

**Хамăр инф.**

# Кил тата хушма хуҫалăх



# "Пурне те кĕтетпĕр"




***Муркаш салинче хурт-хăмăр продукчĕпе суту-илỹ тăвакан лавкка пурри пуриншĕн те меллĕ. Кĕске вăхăт хушшинче кирлĕ тавар туянма пулать е сутлăхра ҫук пулсан ăна туянакан ыйтнипе кỹрсе килеҫҫĕ. Утарҫă вĕлле таврашĕнче кирлĕ инвентарь тата ытти кирлĕ япаласем туянма пултарать. Ахаль ҫын валли – хурт-хăмăр продукчĕ. Сентре ҫинчи тавар экологи тĕлĕшĕнчен таса тата пысăк пахалăхлă, апла пулсан сывлăхшăн чăннипех те усăллă. Эпĕ пынă самантра туянакан кунта йышлăччĕ. Пĕри прополис илсе килнĕ те ăна кунти таварпа ылмаштарасшăн, теприне чечек тусанĕ (пыльца) кирлĕ. Лавккари ĕҫ-хĕле питĕ вырăнлă йĕркелени аван курăнчĕ. Эпĕ Вера Алексеевна Гониашвили сутуҫăпа калаҫрăм.***

– Халăх хурт-хăмăр отраслне аталантарма тата унăн продукцийĕпе анлă усă курма тăрăшать. Ҫак ĕҫрен тупăш илме пулать, унтан та пĕлтерĕшлĕреххи вара сывлăхшăн экологиллĕ таса апат-ҫимĕҫ туса илни. Пыл епле паха ҫимĕҫ шутланнине пурте пĕлетпĕр. Пыл хурчĕ ĕҫчен те тирпейлĕ ҫынна кăна кăмăллать.

Пирĕн лавккари тавар ассортиментчĕ питĕ пуян. Халăха ятарлă тĕрĕслев витĕр тухнă пахалăхлă пыл сĕнетпĕр: ахальли, măйăрпа хутăштарни тата ытти тĕрли. Сутлăхра йăлтах кăҫалхи ҫĕнĕ продукци. Чечек тусанĕ, хурт ҫăкăрĕ, ама хурт сĕчĕ, прополис тата ытти тĕрлĕ тавар сывлăхшăн питĕ усăллă. Кашни продукцин вара хăйĕн туянаканĕ. Унăн кăмăлне кура тавара пĕчĕк тата пысăк виҫепе сутатпăр. Хурт-хăмăр продукчĕпе усă курса тунă косметика тата парфюмери изделийĕсен ассортименчĕ те пуян. Паллах, ҫаксене ют ҫĕр-шывран кỹрсе килнĕ иккĕленỹллĕ таварпа улăштарма ҫук – кунта йăлтах хамăр патри продукци. Ҫавăн пекех прополис настойкисем, бальзамсем сĕнетпĕр туянакана. Илекене эпир инвентарь тĕлĕшĕнчен те вăхăтра тивĕҫтеретпĕр. Пыл рами валли хатĕр рейкăсем пур, хакĕсем туянаканшăн меллĕ, ăна килте ăсталас пулсан вара вăхăчĕ те ытларах кирлĕ. Ҫавăн пекех тĕрлĕ вĕлле сутлăхра пур. Акă халĕ хĕлле валли ăшă минтерсем ытларах туянма пуҫларĕҫ.

Хурт-хăмăра вăхăтра сиплемелле тата профилактика ĕҫĕсем ирттермелле, унсăрăн ҫемье йышне сыхласа хăвараймăн, пысăк тупăш та илеймĕн. Ҫак тĕллевпе тĕрлĕ эмел тăтăшах кỹрсе килетпĕр, ҫавăн пекех вĕллене ҫакса памалли эмелсем те пур. Халĕ пыл юхтарас ĕҫ вĕҫленсе пырать. Ҫавна май сиплев курсĕсем ирттерме те вăхăт ҫитрĕ. Чылайăшĕ ҫемьене сахăр сиропĕпе апатлантарать. Пирĕн патра сутлăхра инвертланă сироп пур. Ҫакă пĕр вăхăтрах сиплев курсĕ те, пахалăхлă апат та шутланать. Сироппа усă курни вĕллене хĕл каҫма хăварнă пыла ылмаштарма май парать. Ҫавăн пекех хамăр агентство хатĕрленĕ вощина сутатпăр. Ҫакă ытти регионтан кỹрсе килнинчен самай пахалăхлăрах, унпа усă курнисем ҫакна ҫирĕплетме пултараҫҫĕ.



Хурт-хăмăр отраслĕнче тупăш параканни пыл кăна мар, ăвăс тата ăна юхтарнă хыҫҫăнхи продукт, прополис, хурт ҫăкăрĕ те утарҫăшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ҫаксене эпир пурне те хамăр пунктра йышăнатпăр. Лавкка кашни кунах, канмалли кунсемсĕр пуҫне, 8 сехетрен пуҫласа 16 сехетчен ĕҫлет, пирĕн пата 8-909-301-45-11 номерпе шăнкăравлама пулать. Пурне те хапăл туса кĕтетпĕр.

**Р. АЛЕКСАНДРОВА**
**калаҫнă.**

**ПАХЧАРА**

# Сăтăрҫă курăксем

Ҫум курăкĕ сăмах пуҫармалли тема мар-ха та, ҫапах калаҫмах тивет. Пирĕн тăрăхра ҫулран ҫул тухакан йăх-яхсен йышĕ пысăк пулин те, урăх регионта сарăлнă ҫум курăкĕ те чăвашра тĕл пулма пуҫланине палăртаҫҫĕ «Россельхознадзорăн» республикăри управленийĕн ĕҫченĕсем. Вĕсем чукун ҫул е ытти транспортпа, ҫавăн пекех унтан турттаракан продукципе килеҫҫĕ.

Чи малтанах ют мур ҫын тата выльăх сывлăхĕшĕн те сиенлĕ пулнине палăртмалла. Аллерги чирĕсем аталанаҫҫĕ, выльăхăн вар-хырăмĕ пăсăлма е вăл наркăмăшланма пултарать. Уйрăмах выльăхшăн паслен тата горчак йышши курăксем сиенлĕ. Карантин ҫум курăкĕсем ял хуҫалăх культурисен тухăҫне те палăрмаллах чакараҫҫĕ, пулăхлă ҫĕре те япăхлатаҫҫĕ.

Республикăра вĕлтрен пурҫăнĕ (повилика европейская) хунаса кайнине палăртмалла. Сăмахран, Канаш тата Комсомольски районĕсенчи фермăсем сывăхĕсенчи усă курман 0,6427 гектар ҫĕр тĕлĕшпе темиҫе ҫул каяллах карантин фитосанитари режимне ҫирĕплетнĕ.

Асăннă паразитăн тымарĕ те, ҫулҫи те ҫук. Унăн тунисем пĕр-пĕр культура тăрăх явăнса ỹсеҫҫĕ. Чечекĕ шурă е шупка хĕрлĕ тĕслĕ. Паянхи кун унăн 270 тĕсне тупса палăртнă. Вăл вăрринчен сарăлать, хăшпĕр чухне уйрăм пайсенчен те вăй илсе кайма пултарать. Повилика 20 пин вăрă тăкма пултарать, хăшпĕр тĕсĕ вара – 100 пин таранах. Нỹрĕк ҫитмесен те пĕтмест.

Ку ҫум курăкĕ тĕш тырра та, пахча ҫимĕҫе те шар кăтартать. Тухăҫлăха чакарать, продукци пахалăхне япăхлатать, ỹсен-тăран сăтăрҫисене сарăлма май парать. Унра наркăмăшлă япала сапонин виҫи пысăк, ҫавăнпа та повиликăпа хутăшлă утă выльăхшăн сиенлĕ. Уйрăмах япăх типĕтни вар-хырăма чире ярать.

Вăл пахчана ерсен унран хăтăлма йывăр. Пирĕн йăрансене лекес хăрушлăх вара чăнах та пур. Управлени специалисчĕсем кашни ҫулах пĕр-пĕр пахча ҫимĕҫ вăрлăхĕн хутаҫĕнче тупса палăртса вĕсене тỹрех тĕп тăваҫҫĕ, анчах та пур хутаҫа та тĕрĕслесе ҫитерейменĕ вĕт.

Калăпăр, пĕлтĕр Ставрополь крайĕнчен кỹрсе килнĕ фуражлăх тулă миххисенче йышлă пулнă вĕсем. Пин ҫурă тонна тулла ятарлă технологипе сиенсĕрлетме тивнĕ.

Кăҫал вара Шупашкарта пахча ҫимĕҫ тата чечек культурисен вăрлăхĕсен хутаҫҫисенче ҫав паразитах тупса палăртнă. Ку партие ҫунтарма тивнĕ.

Кăҫал тата управлени специалисчĕсем Канаш станцийĕ ҫывăхĕнче уйхир пурҫăнĕ (повилика полевая) сарăлнă лаптăксене тупса палăртнă. Ку йăхях вара пирĕн тăрăха чукун ҫул транспорчĕпе ҫитнĕ. Улатăр хулинче амбрози (амброзия трехраздельная) вăй илнине ҫирĕплетеҫҫĕ специалистсем.

Кикенек (череда волосистая), амбрози (амброзия полыннолистная) вăррисене тупса палăртнă 910 тонна соя шротне ятарлă технологипе сиенсĕрлетме тивнĕ.

Сăмах май, управлени специалисчĕсем ҫур ҫулта пахча ҫимĕҫ тата чечек вăрлăхĕсен 1834,6 пин хутаҫне тĕрĕсленĕ.

Халăхра: «Чирличчен сыхланни йỹнĕрех ларать», – теҫҫĕ. Ют ҫум курăка пахчара е хуҫалăхра вăй илме парас мар тесен ҫак самантсене шута илни пĕлтерĕшлĕ. Карантин фитосанитари режимне ҫирĕплетнĕ вырăнсенчен кỹрсе килнĕ продукцие специалистсене тĕрĕслеттермеллех. Вăрлăх, калчатĕм туяннă чухне ятарлă сертификатсем (сорт идентификацийĕн е карантин) пуррине хăвăр курса ĕненĕр.



Карантин ҫум курăкĕ сарăлнă лаптăксенчи йăхяха аялтан илсе (ҫĕртен 3-4 см кăна хăвармалла) чечек ҫуриччен ҫулса пăрахма тăрăшмалла. Кая юлсан паразит вăрă тăкма пултарать. Курăка типĕтмелле те ҫунтармалла. Хăмăлне (юлашкине) ҫулăмпа е хими меслечĕпе (раунтап 1 гектар ҫине 2–4 литр кирлĕ, торнадо – 0,6–0,8 литр, пивот – 1 литр, керб W – 4–5 кг) тĕп тумалла.

Сăмахран, Канаш районĕнчи «Хучель» обществăн ферми таврашĕнчи ҫак ҫум курăка гербицидпа сиенсĕрлетнĕ. Ытти ҫĕрте те технологие пăхăнса ку мурпа кĕрешнĕ.

Тепĕр хут ку мур вăй илесрен ҫулсерен хуҫалăх территорийĕсене тĕпчемелле. Иккĕленỹллĕ ỹсентăран асăрхасанах специалистсемпе канашласа тĕп тумалла.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
**Раҫҫейри ял хуҫалăх надзорĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн специалисчĕ.**

# Пыл ярмăрккине чĕнетпĕр!

**Августăн 17-мĕшĕнче, эрне кун, Муркашра "Сывлăх" ФСК умĕнче хурт-хăмăр ĕҫне халалланă кун иртет (августăн 14-мĕшĕ – Пыл спасĕ). Ҫакăнта ку отрасльти тĕрлĕ продукципе суту-илỹ тума палăртнă. Кăмăл тăвакансене кунта пыл ҫеҫ мар, унран хатĕрленĕ тĕрлĕ ҫимĕҫ сĕнĕҫ. Пĕр-пĕрин опычĕпе паллашма май пулĕ. Ҫавăн пекех хаваслă юрă-кĕвĕ чуна ҫĕклĕ.**

**Хапăл тусамăр йыхрава!**

**Пĕлетĕр-и эсир?**



**ĂВĂС**

Ăвăсра 70 – 75 процент эфир ҫăвĕ, 15 процент ҫу кислоти шутланать. Тĕрĕс ирĕлтернĕ ăвăсăн аялти енĕ таса, ҫутă е тĕксем тĕслĕ тата ырă шăршăллă пулмалла. Вăл шывра ирĕлмест, терпентинра, бензинра, хлороформра, вĕрекен спиртра ирĕлет. Ăвăспа шăнса пăсăлнине сиплеме, ỹслĕке ҫемҫетме, сурана ỹт илтерме тата ытти тĕлĕшпе усă кураҫҫĕ. Ҫавăн пекех вăл кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмсене сĕт ытларах пухăнма пулăшать. Хурт-хăмăр ăвăсĕпе ĕне ҫуне пĕрле хутăштарнă эмел волчанка чирне сиплеме пулăшать. Ăвăс хупăлчине тата караса чăмлани шăлҫăваршăн питĕ усăллă. Унпа фармаци, косметика изделийĕсем тăваҫҫĕ.

**ПЫЛ**

Пыл тытăмĕнче – 300 тĕрлĕ хими пĕрлешĕвĕ. Пылра 36 процент фруктоза, 32 процент глюкоза, 8 процент мальтоза, 2 процент сахароза шутланать. 100 грамм пылра С витамин – 2,00 мг, В 6 витамин – 0,10 мг, Н витамин – 0,04 мг, РР витамин – 0,20 мг, В 3 витамин – 0,13 мг, В 2 витамин – 0,03 мг, В 1 витамин – 0,01 мг, фоли кислоти – 15,0 мг.

Пыл тутлă ҫимĕҫ кăна мар, пысăк сиплевҫĕ те. Халăх медицини ăшă мунчара шĕвĕ пылпа массаж тума сĕнет. Ҫапла туни чылай чир-чĕрпе, вăл шутра остеохондрозпа кĕрешме те май парать.

Ỹт-пĕве ывăҫпа вунă минут хушши массаж тумалла. Енчен те пыл пахалăхлă пулсан кĕске вăхăт хушшинче алă ҫине шурă кăпăк тухать (ку пахалăхăн пĕр палли). Ҫакăн хыҫҫăн ҫан-ҫурăма ăшă шывпа ҫумалла, крем сĕрсен лайăх. Сиплев массажĕн курсĕ 10 – 12 хутчен пулмалла, ăна пĕр кун урлă тумалла.

**ХУРТ ҪĂКĂРĔ**

Вĕлле хурчĕ тĕрлĕ чечек ҫине вĕҫсе хурт ҫăкăрĕ пухать, вăл нектартан тата чечек тусанĕнчен тăрать. Ăна пуҫтарас тесен ятарлă пухмачпа усă курмалла. Пĕр ҫемьерен хурт-хăмăра сиен кỹмесĕр 1 – 5 килограмм таран ҫăкăр пухма пулать. Ăна хĕвел ҫинче типĕтме юрамасть. Ҫăкăра пĕр килограмм пыл ҫине ярса хутăштармалла, кунне 50 – 100 грамм чухлĕ ҫимелле, чылай чир-чĕртен пулăшать. Типĕ продукта икĕ ҫул упрама юрать. Ăна пурин те ҫиме тăрăшмалла. Ҫакă эрех ĕҫес, пирус туртас туйăма чакарать. Хурт ҫăкăрне 21-шер кун ҫиме тăрăшмалла, ун хыҫҫăн 10 кун тăхтамалла. Анчах та ăна 18 сехет хыҫҫăн ҫимелле мар.

**АМА СĔЧĔ**

Самай малтан ҫак продукта пысăк укҫа-тенкĕллĕ ҫынсем кăна туянма пултарнă. Ҫавăнпах та пулĕ ăна "король ҫимĕҫĕ" теҫҫĕ. Вĕллерен тин кăна татса илнĕ ама хуранĕнчи сĕте уйрăмах ҫул кайнă арҫынсем ҫиме тăрăшнă, ҫапла майпа вĕсем ҫемье телейне тата ҫамрăклăха ытларах вăхăт упранă. Анчах та сĕт ахаль ҫĕрте нумай вăхăт хушши упранмасть. Хальхи технологи вара паха та сиплĕ ҫимĕҫе чылай тапхăр упрама май парать. Ама сĕчĕ хурт-хăмăр продукчĕсенчен чи хăватлă биостимулятор шутланать.

**ПРОПОЛИС**

Прополис кĕркунне ытларах пухăнать. Тĕрлĕ сурана, чир-чĕре сиплет. Сыпăсем туртсан, пилĕк ыратсан прополислă пусмана сыхаҫҫĕ. Ăна пусма ҫумне пухас тесен килте тĕртнĕ пире рамăсем ҫине хумалла, вĕсем вара хăйсемех сыпăҫтараҫҫĕ.

Прополис настойкине ĕҫни сывлăха ҫирĕплетме пулăшать. Кĕленче савăт ҫине спирт ямалла, унта прополис хушмалла, ăшă ҫĕре лартмалла. Ирĕлсе пĕтсен пĕчĕкшер порципе ĕҫмелле. Уйрăмах хытă шăннă хыҫҫăн питĕ усăллă.

# Сĕтшĕн – субсиди

Чăваш фермерĕсем панă кашни литр сĕтшĕн ҫуллахи тапхăрта субсиди илме пултараҫҫĕ. Кун пирки республика пуҫлăхĕ ятарлă указ кăларнăччĕ.

Ҫулленех ҫуллахи вăхăтра сĕт хакĕ чакса каять, 20-40 процент таранах. Тĕрĕссипе каласан ытти вăхăтра та сĕт хакĕ пысăк теме ҫук. Ăнсăртран мар ĕнтĕ ял ҫыннисем ĕнесем усрама пăрахса пыраҫҫĕ.

Ҫак указпа ял ҫыннисене тăкаксене республика бюджетĕнчен саплаштарма пăхнă. Килти хушма хуҫалăхран сутнă кашни литр сĕтшĕн 1 тенкĕ те 50 пус параҫҫĕ. Ял хуҫалăх организацийĕсене ҫапла пулăшаҫҫĕ: 1 тенкĕ – пĕрремĕш сортлă сĕтшĕн, 2 тенкĕ – паха сортлишĕн. 2012 ҫулта ҫак тĕллевпе республика бюджетĕнчен 70 миллион тенке яхăн уйăраҫҫĕ.

Ял хуҫалăх предприятийĕсен субсиди илме тавар накладнойĕсене тăратмалла пулать. Килти хушма хуҫалăха тытакансен вара ял администрацине каймалла. Ҫак кунсенче вĕсен заявлени ҫырмалла. Ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсем ял ҫыннисем панă сĕт пирки реестр тăратаҫҫĕ.

Республика правительстви июлĕн 31-мĕшĕнче субсиди памалли правилăсене ҫирĕплетнĕ. Хальхи вăхăтра ял хуҫалăх министерстви укҫа тỹлеме расчетсем йышăнать. Укҫа-тенкĕн пĕрремĕш пайне август уйăхĕн виҫҫĕмĕш вунă кунлăхĕнче куҫарса пама палăртаҫҫĕ.

**Хамăр инф.**

**Полици хроникинчен**

# Пĕрисем правур, теприсем айван

**Çак кунсенче районти шалти ĕçсен пайĕнче вăй хуракан следовательсен умлă-хыçлă тенĕ пекех районта пулса иртнĕ вăрăлла ĕçсемпе уголовлă ĕçсем пуçарма тиврĕ. Ĕçсене тишкерсен вĕсенче пуринче те пĕр енчен кукăр алăсен правурлăхĕ палăрать, тепĕр енчен вара – тăкак е сиен тӳснисен айванлăхĕ.**

• Муркашри пĕр хваттерте талăк ытларах телевизорăн хăйĕн хуçисĕр «пурăнма» тивнĕ. Тунсăхласа çитнĕ техника те хăй тĕллĕнех сасă панă – ун тĕлне вăхăтлăх хуçа тупăннă. Хальлĕхе паллă мар çын çăрана юрăхлă уççи тупса хваттертен çак телевизора вăрласа тухса кайнă, унпа пĕрлех ăшă плед тата простынь таврашне те. Çаплă вара кил хуçи самантрах пысăк тăкак тӳснĕ.

• Малтанхи каç çывăрма выртиччен Ивановка ялĕнче пурăнакан пĕр çемье япăххи пирки шутлама та пултарайман. Вĕсем ирпе тăнă çĕре вара мансардăран компьютер çухалнă, кĕсье телефонĕ те. Чӳречерен кĕме пултарнă вăрă кам пулма пултарассине следовательсем çийĕнчех ăнкарса илнĕ. Айăплă çыннăн шăпине суд тенкелĕ татса парасси кĕттермĕ.

• «Контакт» коллективлă садри дачăна хĕрарăм канмалли кунсенче яланах пысăк кăмăлпа çӳренĕ: пахча ĕçĕпе киленнĕ. Ку хутĕнче вара хĕрарăм йăран çинче ĕçленĕ вăхăтра унăн сумкинчен сахал мар япала çухалать. Дачăна илсе çӳренĕ пысăк сумкăна вăл уçă пырăнтах хăварнă. Хăйĕн вара унта хаклă япала чылай пулнă мĕн. Пĕр сехет хушшинче ылтăн çĕрĕсемсĕр, укçасăр тăрса юлнă вăл: 40 ытла пин тенкĕлĕх тăкак курнă. Юрать-ха юнашар çĕр участокĕнче ывăтса хăварнă документсене тупăннă.

Пичете Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.




С. Б. Сундырь, центральная улица. Сдается в аренду 300 кв. м., под торговлю, офисы и производство.
Алексей 8-905-344-50-36

**ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТОГО КОНКУРСА**

1. Наименование конкурса – открытый конкурс на право обслуживания внутрирайонных маршрутов регулярных пассажирских перевозок автомобильным транспортом, организуемых сверх муниципального заказа в Моргаушском районе Чувашской Республики.

2. Форма торгов – открытый конкурс.

3. Конкурс проводит: администрация Моргаушского района Чувашской Республики.

Место нахождения: Моргаушский район, с.Моргауши, ул. Мира, д.6.

Почтовый адрес: 429530, Моргаушский район, с.Моргауши, ул. Мира, д. 6.

Адрес электронной почты: UKC @ morgau.ru.

Конкурсная документация на сайте администрации района: http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71

4. Предмет конкурса: право обслуживания внутрирайонных маршрутов регулярных пассажирских перевозок автомобильным транспортом, организуемых сверх муниципального заказа в Моргаушском районе: «Моргауши – Шептаки» – 11 км, «Моргауши – Мадики» – 24,2 км, «Моргауши – Юськасы – (ч/з Н.Панклеи)» – 19 км, «Моргауши – Васькино» – 19,8 км, «Моргауши – Тиуши – 18,3 км, «Моргауши – Хорной» – 5 км, «Моргауши – Тренькино – Ильинка» – 30,6 км, «Моргауши – Б.Карачкино» – 30 км,«Моргауши – Кашмаши» – 6 км, «Моргауши – Тойгильдино» – 10 км.

Требование к подвижному составу: 1 автобус с количеством мест не менее 18, в том числе 1 автобус резервный.

5. Порядок и место получения конкурсной документации:

Конкурсная документация предоставляется по письменному заявлению в адрес организатора конкурса по адресу: 429530, Моргаушский район,с. Моргауши,ул. Мира, д. 6, каб. 206.

Плата за предоставление конкурсной документации не взимается.

6. Время и место проведения конкурса 10-00 час. 12 сентября 2012 года, Моргаушский район, с.Моргауши, ул.Мира д.6 каб.206.

Заявка подается в рабочие дни с 8-00 час. до 17-00 час. (обед с 12 час. до 13 час.) с 13 августа 2012 года и до 17-00 час.11 сентября 2012 года.

7. Показатели и порядок оценки квалификации участников конкурса:

Показатели и порядок оценки квалификации участников указаны в «Информационной карте конкурса».

**Глава администрации Моргаушского района**
**Р.Н. ТИМОФЕЕВ.**


**ОКНА И ДВЕРИ**
**окна ПВХ-VEKA, стальные двери**
**от простых до элитных,**
**от дешевых до дорогих.** 5-5.
**Гарантия 3 года.**
**Кредит, рассрочка. Все под ключ.**
**Адрес: г. Ядрин, ул. 50 лет Октября, д. 78.**
**Тел.: 8-961-344-53-47, 8(83547)23-2-96.**







**ВНИМАНИЕ! 13 августа с 8-00 ч. до 19.00 ч. в ДК с. Моргауши РАСПРОДАЖА (летних – осенних) трикотажных изделий (г. Ташкент): халатов, футболок; обуви для всей семьи; нижнего белья; детской одежды; постельного белья. Ждем вас!**

**ЮВЕЛИРНАЯ МАСТЕРСКАЯ:**
**– ремонт и изготовление ювелирных изделий из золота и серебра;**
**– скупка золота (цена за 1 г 850 руб.), старинных монет.**
**Адрес: в здании Дома быта.**
**Тел.: 8-927-668-85-01.** 8-10.

**МЫ ПОМОЖЕМ ЗАРАБОТАТЬ!!!**
В Москву и Московскую обл. требуются
**ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ**
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО.
Вахта. Выезд группами до предприятия.
Гарантии. З/п 25 000 – 35 000 руб.
**Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30.** 2-5.

[illegible] 1-6.
(8352) 44-41-65, (83538) 70-2-43

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ**
**2500 руб.** 1-10.
**РАССРОЧКА.**
**ТРИКОЛОР. ТЕЛЕКАРТА.**
**Тел.: 905-345-77-19.**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**от производителя.**
Замер. Доставка бесплатно.
Низкие цены. 3-10.
**Тел.: 8-987-576-65-62.**





| | суббота 11 августа | | | | воскресенье 12 августа | | | | понедельник 13 августа | | | | вторник 14 августа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +17 | +21 | +23 | +19 | +17 | +20 | +24 | +20 | +15 | +21 | +24 | +19 | +15 | +20 | +24 | +18 |
| Давление мм | 745 | 744 | 743 | 744 | 745 | 745 | 746 | 746 | 747 | 747 | 746 | 747 | 748 | 748 | 748 | 747 |
| Влажность % | 93 | 83 | 71 | 81 | 97 | 91 | 63 | 72 | 96 | 75 | 57 | 62 | 85 | 68 | 49 | 49 |
| Ветер м/сек | 3 | 2 | 3 | 1 | 2 | 4 | 3 | 2 | 2 | 4 | 5 | 4 | 5 | 4 | 4 | 4 |
| | С-В | С-В | С-В | С-З | С | С-З | С-З | С-З | С | С | С | С-В | С-В | С-В | С-В | С-В |
| Солнце восход / заход | | 05:18 | 20:38 | | | 05:19 | 20:35 | | | 05:21 | 20:33 | | | 05:23 | 20:31 | |
| Луна восход / заход | | 23:50 | 16:14 | | | - | 17:06 | | | 00:38 | 17:50 | | | 01:38 | 18:26 | |


**ВЫ ЗВОНИТЕ – МЫ ПРИВЕЗЕМ: цемент, блоки керамзитобетонные, профнастил, профили, трубы, уголки, утеплители, гипсокартон, поликарбонат, теплицы и многое другое. Адрес: д. Рыкакасы, т.ц. «Лотос».**
**Тел.: 8-917-661-02-32.** 7-10.

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78.** 9-10.

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ: ЛЮБОЙ РАЗМЕР** 5-10.
**ТЕЛ.: 8-903-346-40-58.**

**ВНИМАНИЮ ЖИТЕЛЕЙ СЕЛА МОРГАУШИ И МОРГАУШСКОГО РАЙОНА**
**В период с 25 апреля по 31 сентября 2012 г. СУПЕРАКЦИЯ «Мы вернем вам 2500 руб. за каждое окно»**
**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, ВИТРАЖИ, БАЛКОННЫЕ РАМЫ, ПЕРЕГОРОДКИ**
**по минимальным ценам! Москитная сетка в подарок**
**Срок изготовления от 3 до 5 дней. Германское качество. Пенсионерам дополнительные скидки**
**ОКНА** сельский вариант от 3500 р. квартира от 5300 р.
**КОНДИЦИОНЕРЫ** от 13999 р. Продажа. Монтаж. Гарантия.
**«ДАНИЛА-МАСТЕР» ул. 50 лет Октября, д. 6 (торговый центр «Универмаг», 2 этаж).**
**Тел.: 8-927-667-34-38, (83541)37-34-38** 2-5.

**Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, песок, гравмассу, щебень, кирпич.**
**Тел.: 8-960-307-41-78.** 3-10.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 17-20.

**На территории рынка с. Б. Сундырь в шиномонтаж требуется СЛЕСАРЬ. Тел.: 8-906-388-22-02.**

**ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ (доломитовый, гранитный, известковый), КЕРАМЗИТ, ПЕСОК (речной, карьерный), БЕТОН с доставкой до 30 т. за 1 рейс.**
**Тел.: 8-927-668-70-15, 38-70-15.** 15-18.

* * *

**КУПЛЮ ПУХ–ПЕРО НОВОЕ И СТАРОЕ.**
**Тел.: 8-903-379-01-23.**

* * *

**Продаю самодельный трактор. Плуг, прицеп-самосвал, культиватор-окучник. Цена договорная.**
**Тел.: 8-987-668-58-82, 8-987-672-01-39.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 8-905-347-99-15, 67-66-95.** 5-5.

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97.** 6-12.

* * *

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок и замок на ручках окон. Шестикамерный профиль по цене трехкамерного. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а.**
**Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64.** 7-12.

**Ĕне, вăкăр, пĕчĕк пăру, сурăх туянатăп.**
**Тел.: 8-905-343-60-63.** 4-10.

* * *

**Продаю автомашину ВАЗ-21114 2007 года выпуска, ГУР, 16-кл. за 210 тыс. руб. Тел.: 8-927-66-96-225.**

* * *

**Продается однокомнатная квартира (33 кв. м., 3 этаж) в центре с. Моргауши. Цена договорная, около 1 млн. руб. Тел.: 8-916-589-65-95.** 1-2.

* * *

**Кĕркунне пиллĕкмĕш пăруламалли ула ĕне сутатăп. Тел.: 8-961-344-70-04.**

* * *

**Продаю однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Куплю двух- или трехкомнатную квартиру.**
**Тел.: 8-927-855-93-85.**

* * *

**В Нижний Новгород требуются рабочие на сборочное производство автофургонов и спецавтотехники. Вахтовый метод (две недели через две). Питание, проживание бесплатно. Выезд группами до предприятия. Соц. гарантии. З/п 25000-40000 руб. в месяц. Тел.: 8-908-766-41-45 (Н.Новгород), 8-906-386-56-82 (Чувашия).** 3-5.

* * *

**Кăçалхи тырă тата улăм сутатпăр.**
**Тел.: 8-937-958-51-14.** 2-2.

* * *

**Продаю Газель-фермер 2004 г. в.**
**Тел.: 8-919-678-64-97.**


Муркаш райпо коллективĕ нумай çул хушши Муркаш райповĕнче тĕп бухгалтер пулса ĕçленĕ
**Нина Никитична**
**НИКИТИНА**
вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 10.08.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4493.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.